К 84.09(=Чув)6
Л 93
Ч-40810

Альбина Любимова

# Чĕрем витĕр иккĕн утас çул выртать...



Национальная библиотека ЧР
4-040810

Альбина Любимова

# Чĕрем витĕр иккĕн утас ҫул выртать...

Юрату кĕввисем

Шупашкар 1996 ҫ.

Чи çывăх çыннăмсене, мана кун çути кăтартнă тата пурнăç сукмакĕ çине çирĕп тăратнă аттепе аннене çак кĕнекене çĕр патне çитиччен пуç тайса халаллатăп.

Искренне благодарю президента Чувашской республиканской ассоциации «Человек» **Сергея Александровича Сергеева** за то, что помог осуществить мою давнишнюю мечту: выпустить книгу «Через сердце мое мы пройдем вдвоем». Желаю ему крепкого здоровья, долгих лет жизни, семейного благополучия и счастья. Мир Вашему Дому!

ПРОВЕРЕНО 2012 29 СЕН 2017

Юратăва автограф

18.01.02 А. Юрату

Ч-40810
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

**Любимова А. В.**
Чĕрем витĕр иккĕн утас çул выртать... Юрату кĕввисем.— 1996 çул.

Альбина Любимова сăввисем питĕ хăйне евĕрлĕ. Тарăн туйăмлăскерсем чуна çепĕçлĕхпе тата ачашлăхпа тултарса лартаççĕ, илĕртӳлĕхĕпе асаилӳ тата юрату тĕнчине илсе каяççĕ...



**Сан уру йĕррисене шырарăм инçет çăлтăрсем çинче...**

* * *

Чĕрем витĕр сар хĕвел курăнать.
Чĕрем витĕр çут уйăх çиçет.
Чĕрем витĕр çăлтăрсем ялтăраççĕ.
Чĕрем витĕр эс килекен çул выртать.
Кил. Чĕрем алăкĕсем саншăн яр уçă.

Кĕр. Çут тĕнчен илемне кăтартăп сана: сар хĕвел шевлисемпе сĕртĕнсе ерипен хĕл ыйхинчен çĕр аннене вăратнине, çурхи шыв çырансенчен тухса хăвăрттăн кĕрлесе юхнине, шур юр чĕнтĕрленсе ирĕлнине, черчен çеçпĕлсем çĕр тĕпĕнчен васкамасăр шăтса тухнине, чĕвĕл-чĕвĕл кайăксем йăвисенче чĕпписене çитернине, сывлăм шăрçисем симĕс курăк çинче йăлтăртатса çиçнине, шăпăртатса ăшă çумăр çунине, кăткăсем ӳркенмесĕр йăвисене купаланине, тĕрлĕ кăмпасем йывăç тĕмĕсем айĕнче çулçăсемпе пĕркенсе ӳснине, сарă, хĕрлĕ, хăмăр сăрăсемпе çăкасен, хурăнсен, юмансен, çирĕксен çулçисем хитреленнине, хур-кайăксем кикак-кикак! кăшкăрса ăшă енне карталанса вĕçнине, çĕр çине тĕрлĕ тĕслĕ çулçăсем тунсăхлăн-тунсăхлăн татăлса ӳкнине, çут тумла шăн пăр пулса тăнине, шур пĕркенчĕкпе витĕннĕ асамлă йывăççене...

Кĕр чĕреме. Çут тĕнчен чи çепĕç юррисене итлеттерĕп сана: валак тăрăх шăнкăртатса чупса çăлкуç юхнине, вĕçен кайăксем чĕвĕлтетнине, çурхи вăрман кĕввине, вăштăр çил вĕрнине, хĕллехи сукмакпа утнă чух шур юр чĕриклетсе ĕнĕрленине...

Кĕр чĕреме. Çут тĕнчен вăрттăнлăхĕн тупсăмне пĕлтерĕп сана.
Чĕрем витĕр сенкер тӳпе илĕртет.
Чĕрем витĕр ирхи шуçăм кăвакарать.

Чĕрем витĕр симĕс тĕнче курăнать.
Чĕрем витĕр иккĕн утас çул выртать...

* * *

Илтетни?
Кунсем, кунсем витĕр,
Çулсем, çулсем витĕр
Чĕнетĕп сана.
Таврăнсам.
Куратни?
Кĕмĕл уйăх çути пулса,
Сар хĕвел шевли пулса
Вĕçеп сан патна.
Йышăнсам.
Туятни?
Кӳççуль тумламĕ пулса,
Ăшă çил пулса
Чуптăватăп сана,
Ăнлансам.
Сисетни?
Юн тумламĕ пулса,
Чĕрӳ таппи пулса
Пурнатăп санра.
Чухласам.
Сассăм çиçĕмле,
Сассăм çĕмренле,
Сассăм çăлтăрла
Кун-çул тĕтри витĕр
Вĕçет сан патна:
Сана пĕлтерме,
Сана систерме,
Сана калама
Тăвата сăмахăма:
«Эп ывăнтăм сансăр пурăнса...»

* * *

Тупсам мана,
ыйтатăп, тупсам.
Пин-пин çын хушшинче
мана курсам.
Çăлтăр куçăмсем
ачашшăн пĕр сана
сăнанине асăрхасам.
Утмăл турат тĕслĕскерсенче
юрату чечекленнине
яр уçă кĕнекери пек
вуласам.
Ăшă куллăм сан еннелле
сар лĕпĕшĕн
вĕçнине туйсам.
Эп çумăнта чухне
сывлăш та пыл
шăршипе тулса ларнине
чухласам.
Тупсам мана
пин-пин çын хушшинче,
шыраса тупсам...
Эп тупрăм сана
тахçанах.
Пĕр сана савнине
систерме
имену чарнине
ăнлансам.

* * *

Таврăнсам каялла.
Эп манман-ха сана.
Асăмрах эп усрап сăнарна.

Ларса юнашар
Асилӳ вучахне
Пӗрле пăтратар.
Сăмăл мар шухăшсем.
Пылак кăварне
Пӗрле тепӗр хут туяр,
Пӗрле курса савăнар.

Эп сисетӗп:
Халь манран аякра
Ытла та йывăр сана.
Кăра шухăшсем.
Таяççӗ пуçна.
Çивӗч туйăмсем,
Хура туйăмсем,
Тăрмалаççӗ чунна.

Таврăнсам каялла.
Эп каçартăм сана.
Эс илтетни?
Тахçанах, тахçанах
Каçартăм сана.
Малашне пӗр-пӗрне
Ăнланса пурăнар,
Юрату вучахне
Çӗнӗрен çутатар!!!

* * *

Çилпе ăмăртса,
Тăвăлпа тавлашса,
Сутăпа тупăшса,
Сăмăл шухăш пулса,
Çилрен хăвăртрах,

Тăвăлтан хăвăртрах,
Шухăшран хăвăртрах
Çитĕп вĕçсе сан пата
Сана йывăр чухне.
Тĕрекӳ пулса,
Çирĕпӳ пулса,
Тӳперен ӳкекен
Çăлтăртан хăвăртрах
Пырса тăрăп çумна
Эс ӳкме пуçласан,
Пуçна уснă чухне.
Мĕнпур вăйăма,
Мĕнпур хăвата,
Мăшăр çунатăма
Хам вĕçес вырăнне
Шелсĕр парăп сана
Çунаттусем хуçăлсан,
Тӳпере эсĕ вĕçнĕ чухне.
Çеçкерен ачашрах,
Хĕлхемрен ăшăрах,
Тӳпере ялтăран
Çиçĕмрен хăвăртрах,
Хĕвел шевли пулса,
Эп типĕтĕп чуптуса
Куçунтан юхакан куççульна
Эс хурланнă чухне.
Эс мăнаçлă чухне,
Эс хăватлă чухне,
Эс телейлĕ чухне,
Эсĕ кулнă чухне
Пурнăп эп айккинче
Саншăн савăнса,
Сăнарна чĕрере упраса...

* * *

Шăнкăравла...
Яланлăхах уйрăлнă чух, кӳрентерес мар тесе, ытахальтен каланă суя сăмах.
Шăнкăравла...
Чунăмпа пěрре те йышăнассăм килмен сивě сăмах.
Шăнкăравла...
Ытла хыт ан кулянтăр тесе лăплантарса каланă ултавлă сăмах.
Шăнкăравла...
Çилпе инçете-инçете вěçсе кайнă çăмăл та ниме тăман сăмах.
Шăнкăравла... Шăн-кă-рав-ла-а-а-а...
Таçтан-таçтан аякран, ахрăмăн-ахрăмăн килсе çапакан, теме асаилтерекен, чуна тепěр хут çěнěрен хумхантаракан, пăлхантаракан, шанчăк сӳнменнине ěненес килекен сăмах...

* * *

Тумтир çине лач! сирпěнсе ларса типнě пылчăка тасатас тесе темле вăй хурса сăтăрсан та, йěр юлатех... Алла супăнь тытса, тумтире шывпа çусан çеç япала тасалать.

Çын ятне варалас тесе каланă усал сăмах пылчăк евěрех. Пěр сыпăнсан, часах манăçмасть. Пěр вăхăт çеç, ӳркенмесěр, ята тасатас тесе ырă ěçсем нумай тусан, усал сăмаха хуллен манăçтарать, пěтерет.

* * *

Куçăмсем-сутăнчăксем, манăн çывăх тусăмсем, ан ялкăшăр хěмленсе, ан сапăр шевлěрсене, икě пěчěк хěвеле хуплăр куç хупанки-

пе, ан систерӗр ҫынсене эпӗ хыт юратнине...

Куҫӑмсем-сутӑнчӑксем, манӑн хаклӑ тусӑмсем, ан ҫиҫсемӗр йӑлкӑшса, ан илӗртӗр ҫуталса, икӗ пӗчӗк ҫӑлтӑра хуплӑр куҫ хупанкипе, ан пӗлтерӗр савнине вӑл мана килӗшнине...

Куҫӑмсем-сутӑнчӑксем, манӑн шанчӑклӑ туссем, пытарсамӑр хӑвӑртрах манри пылак туйӑма чӗрен вӑрттӑн кӗтесне, никам тупайман ҫӗре...

Куҫӑмсем-сутӑнчӑксем, ӑнлансамӑр, айвансем, ытла нумай ҫӗр ҫинче кӗвӗҫ чунлӑ сив ҫынсем...

* * *

Килсем часрах! Кӗскетсе инҫе ҫулна ҫитсем часрах! Пӗр сана ҫеҫ кӗтетӗп чӑтӑмсӑррӑн ир те каҫ. Ик куҫӑмран юхан ҫут куҫҫулӗме эс курасран эп шӑлтӑм уйрӑлу сӑмахӗсем каланӑ чух. Санпа вӑхӑтлӑха уйрӑлас умӗн эс парнеленӗ шурӑ чечексем манпа пӗрле ывӑнса ҫитрӗҫ пулмалла сана кӗте-кӗте. Вӗсем эп сиссерен именнӗн хуллен-хуллен тӑкаҫҫӗ куҫҫулӗсене сар чӗнтӗрлӗ сӗтел ҫине. Шур лӗпӗш евӗр шурӑ ҫеҫкесем илемлӗн ярӑнса вӗҫеҫҫӗ сывлӑшра, тунсӑх ташши ташлаҫҫӗ явӑнса.

Шур куҫҫульсем — шур ҫеҫкесем ик кунӑмра!

Шур ҫеҫкесем — шур куҫҫульсем ман чунӑмра!

Пӗр сан валли усрарӗҫ чечексем черчен ҫеҫкисене. Халь, ак, шур ҫеҫкесем шур сӑмахсем пулса выртаҫҫӗ умӑмра.

Пӗр сан валли усратӑп эпӗ чӗремре чи ҫе-

пĕç сăмахăмсене. Ахах-мерченĕн эп тиретĕп вĕсене шухăш-ĕмĕт çиппи çине.

Инçе çулран часрах эс таврăнсам, ытла нумай мана ан кĕттерсем. Черчен сăмахăмсем, çут туйăмсем кĕтеç сана...

Асамлăх тĕнчинче иккĕн юлсан, ик куçăмри шурă куççульсене — шурă çеçкесене пĕр васкамасăр ерипен ачашшăн чуптуса типĕтессе шанса пурнатăп эпĕ...

* * *

Сан уру йĕррисене шырарăм
Инçет çăлтăрсем çинче.
Сан уру йĕррисене шырарăм
Шур юрлă ту тăрринче.
Сан уру йĕррисене шырарăм
Шур чечексем хушшинче...
Таçта та шырарăм, тупаймарăм.
Ай, кулянтăм, кулянтăм,
Пуçа тытса кулянтăм,
Куçа хупса кулянтăм,
Чун-чĕререн кулянтăм.
Шалти куçпа, ай, пăхрăм та,
Чĕрем çине, ай, пăхрăм та,
Ăнсăртран эп асăрхарăм
Чĕрем çинче йĕррӳсене...

* * *

Сана тепĕр хут çеç курас тесе,
Сассуна тепре çеç илтес тесе,
Куçусене тепре çеç тинкерес тесе,
Пӳрнӳсене тепре çеç сĕртĕнес тесе.

Çил-тăвăл витĕр, çумăр витĕр
Пĕр сан пата эп хатĕр çитме.

Сана тепӗр хут чуптӑвас тесе,
Тепӗр хут сан чунупа калаҫас тесе,
Тепӗр хут сан ӳтне туяс тесе,
Ачаш сӑмахсем санран илтес тесе

Вилӗмрен хӑрамасӑр, ҫулӑм витӗр
Пӗр сан пата эп хатӗр вӗҫме...

* * *

Чӑн-чӑн юрату шывра путмасть.
Чӑн-чӑн юрату вутра ҫунмасть.
Чӑн-чӑн юрату элек айне пулмасть.
Чӑн-чӑн юрату йывӑрлӑхран хӑрамасть.
Енчен те юрату шывра путать пулсан,
Енчен те юрату вутра ҫунать пулсан,
Енчен те юрату элеке парӑнать пулсан,
Енчен те юрату йывӑрлӑхран хӑрать пулсан,
Вӑл юрату чӑн-чӑн юрату мар.
Вӑл юрату — суя юрату.
Вӑл юрату — ултавлӑ юрату.
Ун пек юрату вилнишӗн
Куҫҫуль тӑкса чуна ҫурма та кирлӗ мар...

* * *

Юрату, ҫын пекех, чӗрӗ. Вӑл — мӗнпур чӗрӗ чун еверлех — ҫуралать, аталанать, вӑй илсе хӗмленсе ҫунать, ерипен ҫунса тӗлкӗшет-тӗлкӗшет те, юлашкинчен вилет. Юрату сан чӗрӳнте ҫуралчӗ пулсан, ӑна вӗлерме ан тӑрӑш. Вӑл хирӗҫ тӑрӗ. Унӑн та пӗрре те вилес килмест-ҫке! Унӑн та пурӑнас килет! Чӗрӳнте юратӑва вӗлерме хӑтланни — хӑвна ҫеҫ асаплантарни. Вилӗм — хӑрушӑ япала. Юратӑва тӗкӗнмесен, хӑй пурнӑҫне канлӗн ӗмӗрлеме май

парсан, вăл, вăхăт çитсен, урăх сана кирлĕ маррине ăнланса илĕ те, хăй ирĕкĕпех чĕрӳнтен тухса кайĕ.

* * *

Миçе пин çын кусне юрату шыраса тинкермерĕм-ши эпĕ ыйтуллăн хам пурнăçра? Пурте вĕсем пуш-пушăччĕ...

Сан куçусене ăнсăртран тĕл пултăм та, шалтах тĕлĕнсе кайрăм. Вĕсем чĕрĕ. Вĕсенче пĕр вĕçĕм çиçĕм ялтăраса тăрать, çут уйăхлă каç тĕлĕрет, хĕвел çиçет. Вĕсем илĕртеççĕ, чĕнеççĕ, йыхăраççĕ...

Куçусенче, тин çурăлнă чĕп-чĕрĕ чечек еверскерсенче, тарăн шухăш вулатăп, пуласлăхăма куратăп, вĕçĕ-хĕррисĕр тап-такăр сукмак йыхăрать. Сан куçусене тинкернĕçем вĕсен ăшне путас килет, умăмра çуталса йыхăракан сукмакпа пĕр чарăнми малалла утас килет. Ниçта чарăнмасăр, никама пĕр сăмах чĕнмесĕр, ăшăмри пылак туйăмпа киленсе утасчĕ манăн...



# Мĕншĕн пурнăç шурă-шурă хут мар-ши?

* * *

Юратакан чĕрене улталаймăн: темле тăрăшсан та, темле вăлтсан та...

Юратакан чĕре çич куçлă. Çын курманнине витĕр курать.

Юратакан чĕре çич хăлхаллă. Никам илтменнине çивĕччĕн илтет.

Юратакан чĕре çич туйăмлă, никам сисменнине сисет.

Юрату вăл асамлăх: çыннăн чĕрине çивĕчлетет, вăйлатать, сисĕмлетет!!!

* * *

Мĕншĕн пурнăç шурă-шурă хут мар-ши? Аллăма тытăттăм та хура кăранташ хама килĕшнĕ пек, хам пĕлнĕ пек, хам ăнланнă пек кун-çулăма шăрçаласа çырса хурăттăм шур хут çине.

Мĕн те пулсан килĕшмесен пурнăçăмра, илĕттĕм алла хуратмалли. Хăвăрт анчах хуратăттăм тахçан тăрăшсах çырнă сăмахсене— пулăмсене. Тунă йăнăшăмсем çухалĕччĕç самантрах куç умĕнчен. Мĕн пулни-иртни тухĕччĕ манăçа, ыраттармĕччĕ чуна. Каллех умăмра шап-шурă хут çеç юлĕччĕ, шурă юрпа витĕннĕ уй евĕр куçа йăмăхтарĕччĕ. Хурлăх мĕнне манăттăм, хуйхă мĕнне пĕлмĕттĕм. Йывăрлăхсем пĕтĕччĕç, куççулĕмсем типĕччĕç.

Эх, мĕншĕн пурнăç шурă-шурă хут марши? Çут тĕлей хĕвелĕ çеç пурнăçăм тӳпинче хаваслăн çиçĕччĕ! Савнăç симпылне кунран-кун кăмăл туллин ĕçĕттĕм! Курайманлăх, усал тавлашу, харкашу, йывăрлăх çинчен шур хут çине çырмăттăм. Юрату çеçкисене çеç шур хут

ҫине тӗрлӗ тӗслӗ сӑрӑсемпе ӳкереттӗм. Ыркӑмӑллӑхӑмпа ҫынсене савӑнтарӑттӑм, хӗвел шевлиллӗ ҫутӑ-ҫутӑ туйӑмпа пуян чӗреме пайӑн-пайӑн пайласа пурне те валеҫӗттӗм.

Эх, пурнӑҫ, пурнӑҫ, мӗншӗн эсӗ шап-шурӑ хут мар-ши?

* * *

*Аттене, Василий Егорович Яковлева, халаллатӑп*

Пысӑк пурнӑҫа хӑюсӑр хӗрачан тӑван килтен тухса кайнӑ чухне атте пиллерӗ мана: «Хӗрӗм, пурнӑҫ вӑл — тӑван атте те, анне те мар, нихҫан та никама та ачашшӑн пуҫран шӑлмасть, ҫавӑнпа та темле йывӑр пулсан та, ан ус пуҫна, хура туйӑмсем хура пӗлӗтӗн чунунта каплансан, ҫак тӗнчерен ан васка уйрӑлма, асра тыт ялан: сан тӑван килӳ пур, сан тӑван аҫу пур, сан тӑван аннӳ пур! Ҫурт алӑкӗсем яланах саншӑн яр уҫӑ! Сана кунта кӗтеҫҫӗ, вараланӑ ятна тасатаҫҫӗ, пурнӑҫа ҫӗнӗрен ӗненме вӗрентеҫҫӗ».

Аттеҫӗм, пуҫӑм усӑннӑ чухне, шанчӑкӑм сӳннӗ чухне, чунӑм хурланнӑ чухне, ҫунатӑмсем усӑннӑ чухне эп асилетӗп санӑн пилне, аса илетӗп сан ӑшӑ куҫусене, тӑван киле, аннене, ҫурт умӗнчи тиреке... Аса илетӗп те, пурнассӑм килет, ӗҫлессӗм килет, ҫунатӑмсене сарса ҫӳл тӳпере вӗҫессӗм килет...

* * *

Ман пурнӑҫӑмпа, эпӗ вилсен, тек ҫак тӗнчере урӑх никам та нихӑҫан та пурӑнса кураймӗ. Эпӗ калаҫнӑ пек, тарӑхнӑ пек, тепӗрне ӑнланма тӑрӑшнӑ пек, вӑй ҫитнӗ таран пулӑшма пултарнӑ пек урӑх никам та пулта-

раймĕ. Эпĕ асапланнă евĕр, ахăлтатса кулнă евĕр никам та кулаймĕ. Ман евĕр туйса, çыкăрма выртнă хулана тĕксĕм кантăк умĕнче шухăша кайса, тем тĕрлĕ шухăшсене, ĕмĕтсене, тĕллевсене пуçра çавăрттарса никам та тăраймĕ.

Пурнăç ик çыран хушшипе кĕрлеттерсе юхакан юханшыв евĕр шав малалла ăнтăлать. Темле тăрăшсан та, нихăçан та, нихăçан та иртнине пĕр чĕптĕм самантлăха та тавраймăн. Эпĕ те пулмăп, туссем те пулмĕç, ачамсем те вăхăт çитсен, ĕмĕрлĕхре çухалĕç. Мĕнпур пулăм улшăнса тăрĕ вăхăтран-вăхăта çак çĕр çинче: çĕнĕ йывăççем ӳсĕç, çĕнĕ çынсем килĕç... Пĕр çут çăлтăрсем çеç мĕнле çуталнă çӳл тӳпере, çавăн пек çуталĕç, çĕр чăмăрĕ те мĕнле çаврăннă хĕвел тавра çак таранччен, çавăн пек çаврăнĕ, сар уйăх та пĕр тулĕ, пĕр каталĕ. Тата пĕр вăхăт, ватăлма пĕлмесĕр, хăйĕн çулĕпе малалла ăнтăлĕ: ниçта чарăнса тăмасăр, ниçта васкамасăр, хăй çулĕ çинчен никама та тĕксе ямасăр, айккинелле хăваламасăр, вăрçмасăр, асапланса юратмасăр, çут тĕнчере мĕн пулса иртнипе интересленмесĕр, çуралаççĕ-и çынсем, вилеççĕ-и, выçă-и, тутă-и, чирлеççĕ-и, сывă-и, уйрăлаççĕ-и, пĕрлешеççĕ-и, пĕр-пĕрне вĕлереççĕ-и е пĕр-пĕр пӳлĕмре пĕчĕк ача каçăхса кайса йĕрет-и, е пĕр-пĕрне савакансем ачашланаççĕ-и,—вăхăт шав хăй çулĕпе малаллах утĕ.

Çĕр çывăрмасăр, куç хупмасăр кĕтеççĕ-и ăна, кĕтмеççĕ-и, темĕн çинчен те шутласа асапланса тарăхаççĕ-и — ăна çавах, вăл малаллах утăм хыççăн утăм тăвать, каялла çаврăнса пăхса мĕн пулни-иртнишĕн кулянмасть. Пĕр-пĕр пӳлĕмри тенкел çине ларса иртнине


НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
Ч-40810

аса илсе хурланма та, ăннă е ăнман шăпашăн савăнма е хурланма май çук унăн — вăл чĕрĕ чун мар. Вăхăтăн ниçта чарăнса тăмасăр малаллах талпăнмалла, тивĕçне пурнăçламалла. Енчен те вăхăт пĕр чĕптĕм самантлăха та пулин чарăнса шухăша путсан, мĕнпур чĕрĕ, чĕрĕ мар япала пурнăçне татĕ.

Уттăрах вăхăт хăй çулĕпе малалла, уттăрах... Эпир вара, шăпамăр хамăра панă вăхăтпа усă курса, çак тĕнчере ырра усала çĕнтерме пулăшар...

* * *

*Раиса Сарби поэтессăна, аппана*

Эх, пурнăç, эс ытла та шелсĕр-çке! Эс ытла та хаяр-çке! Ялан тăллан мана, çапан, хуçан, çĕр çумне çитиччен пĕвĕме аван. Пĕрре те лăпкăн тата канлĕн, хам пĕлнĕ пек, хамăн ăспа çеç пурăнма памастăн.

Санăн çирĕп ытамунта хама туятăп эп мăнаçлăн та хаяррăн кĕрлекен, хумăн-хумăн çĕкленсе авăнакан çил-тăваллă тинĕсри пĕр пĕчĕкçĕ хăйă чĕлли пек.

Эх, пурнăç, пурнăç, эсĕ мана пĕр тĕпсĕр авăрлăха çаврăнттарса туртса кĕрсе каятăн, мăйран пăватăн, сывлăша пӳлсе лартатăн, вилĕме алран пырса тыттаратăн, кусĕнчен пăхтарса юнашар уттаратăн, тепĕр çаврăнса вылянакан кăпăклă хум вăйĕпе сывлăшалла, сар хĕвел патнелле, шур пĕлĕтсем çывăхнех ывăтатăн, çăмăллăн та ирĕклĕн сывлама май паратăн, çут тĕнче илемĕпе чун туличчен киленме пулăшатăн, унтан каллех, çӳл тӳперен хаяр та çăткăн хумсен çăварне ывăтса, мана,

пĕчĕкçĕ хăйă таткине, çын чăтмалла мар, вутлă-çулăмлă тамăка кĕртсе ярatăн. Пĕр шелсĕр лăскатăн, çунтаратăн, тустаратăн, çар уран тĕлкĕшен кăвар çинче ташлаттаратăн.

Эх, пурнăç, пурнăç, эс чĕреме пин-пин çивĕч çĕçĕпе пайăн-пайăн касатăн, пин те пин сăнăпа витĕр тиретĕн!!!

Епле эп чăтатăп-ши? Епле эп пурнатăп-ши? Вăхăт-вăхăтпа хамран хам тĕлĕнетĕп.

Эх, пурнăç, пурнăç, эсĕ çунтаракан хĕрӳ хĕвеллĕн ман чунăма пĕр шыв- тумламĕсĕр типсе, çуркаланса, кушăхса пĕтнĕ, пĕр курăксăр, пĕр чĕрĕ чечексĕр вĕçĕ-хĕррисĕр пушхир евĕр тăватăн.

Пĕр шанчăксăр пин-пин çын хушшинче тăр-пĕччен, ниме ĕненмесĕр, ниме кĕтмесĕр пушанса юлнă чунăмпа вилнĕ çын ĕмĕлки пекех пурнатăп сана пулах, пурнăç.

Эх, пурнăç! Сана пулах туятăп эп хама час-часах икĕ хĕмленсе, чашкăрса çунакан вут хушшипе нимрен хăрамасăр, никама пăхăнмасăр, типсе каясран хăрамасăр чупакан вăйсăр, çип-çинçе хăю евĕр пĕр пĕчĕкçĕ юханшывăн.

Эх, пурнăç, пурăнас килнипе, таптасран хăрамасăр, татасран шикленмесĕр икĕ чул хушшинче пĕр пĕчĕкçĕ сар чечекĕн ӳссе ларатăп.

Мĕнех, тăлла мана эс, пурнăç, лăска, çунтар. Сунтал çине хурса тупта, мĕн чăтмаллине чăтăп, мĕн курмаллине курăп. Ан пурăнтар мана эс лăпкăн. Унсăрăн сип-симĕс курăкпа витĕннĕ, никама пĕр усă кӳмесĕр выртакан шурлăх пулса ларăп.

Эх, пурнăç, сан çирĕп те шелсĕр, хаяр та вичкĕн ытамунта эсĕ мана темле лăскасан та,

темле çавăрттарсан та, темле асаплантарсан та эпĕ туятăп хама чăн-чăн çын пек.

* * *

Ан савăн вăхăтсăр, мана темле тарăхтарсан та, ман куççулĕме эс кураймăн. Кăшкăрса йĕрес килсен те, сана эп чунăмăн сăваплă ахахĕсене кăтартмăп. Мăнаçлăх тени пур-ха халлĕхе манăн...

* * *

*Римма Гурьянова-Прокопьева*
*журналисткăна*

Пурнăçра, хутран-ситрен те пулсан, кулленхи шавран, ăнтăлуран, тĕлпулусемпе калаçусенчен, кĕрлесе юхакан кунçул таппинчен самантлăха айккине пăрăнмалла та, хăв шăпуна хакламалла. Çакă вăл хăвăн çак çĕр çинчи пурнăçна тата та лайăхрах ăнланса илме пулăшать, ытти çынсем хушшинчи хăвăн вырăнна тупма май туса парать.

Чарăнура троллейбус е автобус кĕтсе ларнă чухне-и, скверта йывăç айĕнче пытаннă пĕр-пĕр сак çинче ларнă чухне-и, пĕр вĕçĕм таçта васкакан е канлĕн утса çӳрекен çынсем çине тинкеретĕн те шухăша путатăн: мĕн тĕрлĕ çын çеç çук-ши тĕнчере? Пысăкки, пĕчĕкки, мăнтăрри, çинçи, сарă, хура, хĕрлĕ çӳçли. Кашнин вĕсен хăйĕн пурнăçĕ, хăйĕн хуйхи-суйхи, тунсăхĕ, савăнăçĕ, юратăвĕ. Кашни хăйĕн шăпипе пурăнать: никам та çав çын пек кулма та, кулянма та, юратма та, курайманлăхпа асапланма та пултараймасть. Сăнарах тинкеретĕн те, асăрхатăн: пĕрисен пичĕ-

сем ҫутă, янкăр кăн-кăвак тӳпеллĕ кун евĕр, тен, ҫак самантра хăйсен пурнăҫĕнчи чи телейлĕ пулăма аса илеҫҫĕ пулĕ, теприсен — тĕксĕм, халь-халь чашлаттарса ҫумăр ҫума хатĕрленекен ăмăр тӳпенни пек. Пĕлеесчĕ? Мĕнле хурлăх выртать-ши чунĕсем ҫинче? Пулăшасчĕ вĕсене, сăмах чĕнсе чĕрисене ҫăмăллатасчĕ.

Ҫав кам киле, кам ĕҫе, кам савнипе тĕл пулма, кам тусĕсене курма васкакан ҫынсем телее кашни хăйне евĕрлĕ ăнланаҫҫĕ, ҫавăнпа та кашни хăйне евĕрлĕ пурăнаҫҫĕ те. Пĕр шутласан, миҫе пин-пин ҫын пурăннă эс киличчен ҫак тĕнчере. Юратнă, асапланнă, савăннă, сан пекех пурнăҫ тупсăмне шыранă. Пурăннă-пурăннă та — вилнĕ.

Паян ҫак ҫĕр ҫинче сан вăхăту. Эсĕ кунран-кун ҫынсем хушшинче утса ҫӳретĕн, ĕҫлетĕн, ҫиетĕн, харкашатăн, хăвна ăнланакан туссем шыратăн. Мĕн тĕллевпе килнĕ-ха эсĕ? Мĕн тăвасшăн, мĕнле йĕр хăварасшăн хăв хыҫҫăн е хăварасшăн та мар?

Ҫак кулленхи хĕвĕшӳрен пăрăнса лар та самантлăха айккине, пурнăҫпа вилĕм виҫи ҫине хăв пурнăҫна хурса виҫ...

* * *

Тăван ҫĕршывăм, мăнаҫлă Чăваш енĕм, сан сывлăшу пыл-ҫу шăршиллĕ. Сан сывлăшна сывлас килет. Тăван ҫĕршывăм, санран аякра чухне сан сывлăшу хăват парать. Ыранхи куна, пуласлăха ĕненме хушать.

Тăван ҫĕршывăм, сарă Чăваш енĕм, сан илемӳ кăмăлăма ҫĕклет. Вăрманусем, уй-хирӳсем, ҫĕр тĕпĕнчен тапса тăран ҫăлкуҫусем

манăн чунра. Пĕр вĕçĕм улăхупа утас килет. Сап-сар чечек татас килет. Тăри юррине итлес килет. Киленӳпе чĕрем тулать.

Тăван çĕршывăм, санăн юррусем — чи чаплисем! Эс хывнă кĕвĕсем ялан манра янраççĕ, кăмăлăма çӳл тӳпене çĕклеççĕ.

Тăван çĕршывăм, савнă Чăваш енĕм, манăн вĕри юнра эс пурăнатăн. Ман чĕреме эс вăйлăн таптаратăн.

Тăван çĕршывăм, манăн Чăваш енĕм, инçе çулра сан иксĕлми вăю ӳкме памасть. Тĕнчеп хăть хăш кĕтеснелле кайсан та шухăшăмсем пĕр сан çинчен. Эсĕ пурри, эс ырă-сывă пурăнни, атте-анне, тăванăмсем, тус-тантăшсем хапăл туса кĕтни çунат хушать.

Тăван çĕршывăм, ман юратнă Чăваш енĕм, Эс пур чухне—пур Эпĕ! Эп пур чухне — пур Эсĕ! Сана пĕтме эп памăп. Сан кун-çулна эп тăсăп хам ачамсемпе. Вăхăт çитсен кайма леш тĕнчене, санран ĕмĕрлĕхе уйрălнă чух эп пиллĕп хам ачамсене сан пурнăçна тăсма мăнукăмсемпе...

* * *

Чике тăршшĕ лартса улталама пĕлекенсем, куçран пăхса пĕр вăтанмасăр суйма пĕлекенсем, çын нушипе усă курса пуйма пĕлекенсем пурнăç сунталĕ çинче туптаççĕ паян телейĕсене...

Çын куççульне вĕсем курмаççĕ.
Çын хуйхине вĕсем туймаççĕ.
Çын асапне вĕсем пĕлмеççĕ.
Куç выранĕнче вĕсен ылтăн чăмакки!
Чĕре выранĕнче вĕсен чул татки!
Чун выранĕнче вĕсен тăпра муклашки!

Паян вĕсен вăхăчĕ.
Паян вĕсен кунĕ.
Паян вĕсен саманчĕ.

Алхасăр, иртĕхĕр, хырăмăрсем туличчен çийĕр, карланкăрсем туличчен ĕçĕр! Куçăрсем алтăриччен ахах-мерчен çине тинкерĕр!

Анчах ан манăр, çитĕ-ха сирĕн вăхăт та!!!

Тулĕ-ха сирĕн шалчăр та!!!

* * *

Эп сана çак пурнăçра тĕл пулни калама çук пысăк телей вĕт-ха! Шутласа пăх-ха: енчен те эпир нихăçан та пĕр-пĕрне пĕлмен пулсан, енчен те пирĕн хушăра çак ăшă та черчен, çепĕç туйăм çуралман пулсан, мĕн тери тĕссĕр иртĕччĕ сан пурнăçу, мĕн тери илемсĕр пулĕччĕ ман пурнăç! Пире юрату хавхалантарать-çке! Чуна çĕклет! Юратнă самантра пĕтĕм тĕнчене тыса чуптăвас килет. Урасем çĕр çумне перĕннине туймастăн. Хыçра телей çуначĕсем ӳснĕ тейĕн! Савнăç çути, телей çути куçсенчен тапса тăрать.

Тавах сана эсĕ ман пурнăçра пулнищĕн!

* * *

*Марина Карягина поэтессăна*

Чĕрене тăрăнтарса лартнă çивчĕ çĕçĕпе çĕр çинче пурăнма питĕ йывăр. Ырату чĕрене пĕрмай касса-касса тăрать. Кун çутипе киленме чăрмантарать. Çивчĕ çĕçĕ ялан хăй çинчен аса илтерет. Çавăнпа та, темле хăрушă пулсан та, йĕркеллĕ, ăслă-тăнлă пурăнас тесен, çав çĕççе чĕрӳнтен туртса кăларма хăвăнта вăй тупмалла. Нимрен хăрамасăр вăшт! çĕç

туртса кăлармалла ăна. Вилме пӳрнĕ пулсан, вилмелле пултăр, çăмăллăн сывласа яма пӳрнĕ пулсан, çăмăллăн сывламалла пултăр!

Пурăнмаллах пулсан, суранăм туртăнса сипленĕ, канлĕх те çитĕ. Хăюлăх, хастарлăх тени кирлех пурнăçра. Ун чух тин хăвна ирĕклĕн туйса илĕн...

* * *

Ман чун çине паян лачлаттарса сурса хучĕç. Çав сурчăк мăн ту çинчен веçех çунтарса юхакан лавăран та вĕрирех туйăнчĕ мана. Епле чăтрăм-ши?

Çав сурчăк хăй çулĕ çинче тĕлли-паллисĕр çавăрттаракан çил-тăвăлтан та усалтарах иккен. Епле тӳсрĕм-ши?

Çав сурчăк йывăрлăхра туссем сутнинчен те хăрушăрах иккен. Епле пурнатăп-ши?

Мана паян мĕскĕнлетесшĕн пулчĕç: сынсем умĕнче, хам умра. Ман чыса паян ирсĕррĕн варалама тăрăшрĕç.

Мĕнех, эпĕ çав сурчăка чунăм çинчен шăлса ыватма хал çитертĕм.

* * *

Тусăмсем чăн-чăн сын тесеттĕм. Йывăрлăхра шантăм ал парасса. Тусăмсем харсăр кашкăр тесеттĕм. Кĕтрĕм тăшмансене тытса çурасса. Тусăмсем шанчăклă йытă тесеттĕм. Ирĕк патăм çумма-çуммăн утма. Манпа пĕр каварлă пулĕç тесеттĕм. Хăрамасăр кăтартрăм чунăма уçса. Тусăмсем сутмасса ĕнентĕм.

Такăр çулпа утса пыраттăм. Ансăртран такăнтăм та, ӳкрĕм тăсăлса. Пулăшу ыйтса, тăс-

рăм аллăма. Ал парас вырăнне пăрăнса утрĕç. Малалла мансăрах кайрĕç. Пĕтĕм вăя пухрăм та, хамах тăтăм. Хыттăн чупрăм та, хăваласа çитрĕм. Ним пулман пекех утрăм юнашар. Чуна хытартăм — каçартăм пĕррелĕхе.

Çăмăлах мар çулра тăшманăмсене тĕл пултăм. Курнă курман мана тапăнчĕç. Мана сив сăмахсем каласа хăртрĕç. Усал сăмахпа ятăма варалларĕç. Каллех тусăмсенчен пулăшу ыйтрăм. Тепĕр хут сутмасса ĕнентĕм. Ыр сăмах каласа хӳтĕлĕç терĕм. Хуралнă ятăма шуратĕç терĕм. Харсăр кашкăр вырăнне шакал пулчĕç. Шăлĕсене йĕрсе хыçалтан тапăнчĕç. Шанчăклă йытă вырăнне анчăк çури пулчĕç, хӳрисене хĕссе ман çине хамлатрĕç.

Шăла çыртрăм та пĕтĕм вăя пухрăм. Тусăмсене те, тăшманăмсене те айккинелле ывăтрăм. Сутăнчăксене ĕненме юраманнине лайăх ăнлантăм. Пĕр хама çеç шанмаллине те лайăх ăнкартăм.

* * *

Ĕненетĕн-и, ĕненместĕн-и, калам сана вăрттăнлăха: «Çăлтăрсем те пĕлеççĕ юратма».

Çак тĕпсĕр уçлăхра пур пĕр планета. Пуринчен те хитре çав кăвак планета. Çав çут планета вăл — Çĕр-пике. Кăвак куçĕсем — тинĕссем, куç харшисем — çӳллĕ тусем, кăтра çивĕчĕ — йывăçсем. Тунсăхлă куçĕсемпе тĕпсĕр уçлăха тинкерет Çĕр-пике. Пин-пин çăлтăр хушшинче шырать, шырать вăл савнине. Пĕр вăтанса, пĕрименсе кĕтет, кĕтет çывăх тусне.

Тахçан, тĕнче уçлăхĕ пĕр пĕчĕк пăнчă чухне, пулнă вĕсем яланах пĕрле. Анчах, тĕнче

уçлăхĕ сарăлсан, кайнă вĕсем уйрăлса ăнсăртран. Çăлтăр-каччă чĕри çунать çулăмпа. Чăтаймасăр тунсăхлă уйрăлăва, метеорсем пулса, каять ун чĕри çурăлса. Уçлăхра çап-çутă йĕрсем хăварса вĕçĕç чĕре татăкĕсем çĕр патне. Çĕр-пике тусĕн кашни пайне шеллесе йышăнать ытамне. Ачашлать, ачашлать хуллен сĕртĕнсе. Унтан чăтаймасăр ярать ахлатса, вутлă куççуль тăкать макăрса.

Ĕненетĕн-и, ĕненместĕн-и, çăлтăрсем те пĕлеç юратма. Çăлтăрсем те пĕлеç хурланма.

*Аннене, Клавдия Васильевна*
*Яковлевăна, халаллатăп*

Хĕрарăм — эс асамлăх.
Хĕрарăм — эс илем.
Хĕрарăм — эс мăнаçлăх.
Хĕрарăм — эс элем!
Хĕрарăм — сар хĕвел шевлийĕ!
Санăн яту çӳл тӳпери çут çăлтăррăн ан сӳнтĕр ĕмĕре!
Санăн яту сарă хĕвелĕн сар кун çĕршывĕ парнелетĕр этеме!
Хĕрарăм-чĕрĕлĕх тымарĕ!
Мĕн чухлĕ вăй санра! Мĕн чухлĕ илĕртӳлĕх! Хитрелĕх, техĕмлĕх, ĕçченлĕх, тӳсĕмлĕх, хĕрӳлĕх, сисĕмлĕх. Мĕн чухлĕ ăс санра!
Хĕрарăм — этемлĕхĕн вучахĕ!
Ачусене, хăв мăшăрна хăват паратăн. Шанчăк кăвайтне нихçан сӳнме памастăн. Малашлăха этемлĕхе пĕр чарăнми ертсе каятăн.

Хĕрарăм — çирĕплĕх вуллийĕ!
Чăтăмлăху таса çăлкуçăн тапса тăрать сан чĕрӳнтен. Ыр кăмăлпа чуна уçатăн. Çепĕç аллусемпе сунтал çинче телей чĕнтĕрĕсем тупатăн.

Хĕрарăм — пуласлăхăн евчийĕ!
Хура синкерлĕхе ачаш аллусемпе сиретĕн. Çунатлă кăйкăррăн ачусене хăв хӳттӳне илетĕн. Таса чунпа, çĕн шухăшпа, çĕн ĕмĕтпе малтан мала утма чĕнетĕн.
Хĕрарăм — тăнăçлăх сăпкийĕ!
Арçынсенче арçынлăха пĕтме ан пар! Хăв хыççăн ешĕл хунавсем хăвар!
Нихçан сӳнми ăсупала,
Нихçан сӳнми хăватупа,
Нихçан сӳнми юратупа
Çутат этемлĕхĕн çулне!!!

* * *

*Чăваш хĕрарăмĕсене халаллатăп*

Чăваш хĕрарăмĕ, эсĕ — Чăваш çĕршывĕн тыткăчи, эсĕ — Чăваш çĕршывĕн çирĕпĕ, эсĕ— Чăваш çĕршывĕн тĕрекĕ. Санăн хастарлăху, санăн паттăрлăху, санăн ăсу, санăн илемӳ умĕнче эпĕ çĕр-аннем патне çитиччченех сăваплăн пуçăма таятăп.

Чăваш хĕрарăмĕ, эсĕ пĕр вăхăтрах юратнă анне, ырă кукамай, асанне, маттур аппа, чипер йăмăк, кăмăллă мăшăр, çепĕç те ачаш чун савни те! Мĕн чухлĕ иксĕлми вăй санра! Мĕн чухлĕ черчен сăпайлăх!

Чăваш хĕрарăмĕ! Сан кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлекен аллусем çĕр пек хытă та мамăк пек çемçе. Мĕн тĕрлĕ ĕç тумаççĕ-ши аллусем кун каçипе? Ĕçлемелле чух турткаланса тăмастăн эсĕ. Çулла-и, хĕлле-и, кĕркунне-и, çуркунне-и,— шурăмпуç çути кантăкунтан килсе шаккиччченех, тутлă ыйхуна татса, ăшă вырăн çинче рехетленсе выртмасăр ĕçе пикенетĕн. Савнă мăшăрупа пĕр пӳрт ачу-пăчу телейлĕ

тӗлӗксем курса ҫывӑрнӑ самантра вӑш-ваш анчах яшка лартса яратӑн,— эс пӗҫерекен салма, ҫӑмах, вӗлтрен яшкисене ҫинӗ чух кашӑккине те пӗрле ҫӑтса ярас килет, витӳне тухса ӗнӳне сӑвататӑн, выльӑх-чӗрлӗхне апат паратӑн, хапхуна яр уҫса кӗтӗве хӑвалатӑн, ачусем ҫывӑрса тӑрсан, вӗсене апат ҫитерсе шкула ӑс пухма ӑсататӑн е хӑвӑнпа пӗрле уя ҫум ҫумлама, матиклеме, кӑшман кӑларма, ҫӗр улми чавма ертсе каятӑн. Мӗн пӗчӗкрен вӗсене ӗҫе хӑнӑхтаратӑн. Эсех, ҫирӗп те кӗрнеклӗ юман пек арҫыннупа юнашар тӑрса, аллуна ҫава тытса, хутран-ситрен ҫамку ҫинче ахах пӗрчи пек йӑлтӑртатакан тар пӗрчисене ал тупанӗпе шала-шӑла илсе, выльӑх-чӗрлӗхӳ валли утӑ ҫулатӑн. Канма ларсан та, хӑв ӗшеннине, ывӑннине кӑтартмасӑр — арҫынну ҫемҫе, тутлӑ шӑршлӑ курӑк ҫинче канлӗн выртнӑ вӑхӑтра — шурӑ ҫивитти ҫине хӑв аллупа пӗҫернӗ ҫӑкӑр чӗлли касса хуратӑн, куркана хӑв аллупа сунӑ хӑймаллӑ сӗт тултаратӑн...

Кӗркунне, вӗттӗн-вӗттӗн пӗрӗхекен сивӗ ҫумӑр ҫинчен манса, ӗшеннӗ ҫан-ҫурӑмна килсе ҫапакан ӑшах мар ҫиле асӑрхамасӑр, ҫӗр улми кӑларатӑн, кӑшман касатӑн. Темиҫе пӑтлӑ михӗсене вӑшт! ҫеҫ ҫурӑму ҫине ҫавӑрса хурса машинӑсем патне йӑтатӑн. Аллусене, тав туса, ачашшӑн-ачашшӑн чуптӑвас килет. Сан ҫирӗп те вӑйлӑ аллусем пулман пулсан, эсӗ пӗтӗм ӗҫе тумасан, мӗн ҫинчен калаҫӗччӗҫ-ши пирӗн политиксем?

Ӑсупа пӗрре те катӑк мар эсӗ арҫынсенчен! Ытларах чухне ӑслӑрах та! Эсӗ, пӗр-пӗр ӗҫе ӑнӑҫлӑрах, лайӑхрах пурнӑҫлас тесен, ӑна мӗнлерех тумаллине пӗлетӗн, малтанах курса тӑратӑн.

Чăваш хěрарăмě, эсě чăн-чăн пурнăç тěвви. Санăн янкăр куллу — шăнкăрав сасси пек, санăн куçусем — икě çап-çутă çăлтăр, санăн сăн-питÿпе сар уйăх та, сар хěвел те танлашаймасть. Сассу шăпчăкăнни евěр. Эс юрласан санпа пěрле юрлас килет, санпа юнашар саркаланса, акăш пек шуса ташлас килет, эс тěрленě асамат кěперě евěрлě чăваш тěррилле кěпесене тăхăнса çÿрес килет. Хăнусене те чыслăн кěтсе илсе, кěрекери чи чаплă вырăна лартса, ху тунă кăпăклă сăрапа, ху пěçерне шăрттана сěнсе хăналама пěлетěн. Тараватлăн хисеп тунă хыççăн килěсене тухса кайнă чух кучченеççěр кăларса ямастăн.

Эрнесерен тутлă шăршăллă мунча, чăн-чăн чăваш мунчи, хутса кěртетěн çемйÿне. Тепěр кунне вара хуралнă çипуçна кунěпе, аллусене шеллемесěр, çуса тасататăн.

Чăтăмлăху пěр вěçěм тапса тăракан таптаса çăлкуç пек. Кунěпе халтан кайиччен ěçлесе ывăнсан та, ачу-пăчу чирлес-тěк, ыйху çинчен манса çěрěпе пуç вěçěнче куç хупмасăр ларатăн: вěриленсе выртакан ачу çамки çине йěпе тутăр хуратăн ылмаштара-ылмаштара. Ачу-пăчу сываличчěнех чуну çурăлса тухасла ыратать санăн. Анчах сан чěрÿ канăçсăррăн тапнине никам та курмасть, ху та сăмахламастăн. Е тата çěрле тусěсем патěнчен ÿсěр таврăннă упăшкуна салтăнтарса таса вырăн çине вырттарма та хал çитеретěн. Санра хěрарăмлăха мăшкăлласа, мăнаçлăхна пусарса, хăвна алă çěклесе, ÿтÿ, сăн-пуçу кăвакарса кайиччěнех урапа, чышкăпа хěненине пăхмасăр, арçыннуна каçарма пěлетěн. Сан чысна таптасан та, çěнěрен çěкленме хал çитеретěн эсě, чăваш хěрарăмě.

Эсĕ тума пĕлмен ĕç пур-ши чăваш çĕршывĕнче? Эсĕ — çĕвĕç те, эсĕ — тухтăр та, эсех — предприяти пуçлăхĕ, ертӳçи, эсех — вĕрентекен, профессор. Арçын тума хăранă ĕçе пĕр хăрамасăр тытса тăватăн.

Чăваш хĕрарăмĕ! Эсĕ çулăмлă шухăшлă поэт та! Сан сăввусем юратуллă, вĕсенче пурнăç вĕресе тăрать, кашни йĕрки сывлать, пурăнать. Тăван çĕршыва та, ачу-пăчуна та мухтатăн сăвă йĕркисенче. Арçын ятне çӳлтен çӳле — тӳпене — çĕклетĕн.

Санăн юратăву, чăваш хĕрарăмĕ, çепĕç, илемлĕ, ачаш, питĕ туйăмлă! Хăвăн çинчен манса, пĕтĕм шухăшна-кăмăлна-тĕллевне арçынпа çыхăнтаратăн, унăн ырлăхĕшĕн тăрăшатăн.

Тавах сана, чăваш хĕрарăмĕ, пуриншĕн те! Эсĕ çавăн пек кăмăллă, сăпайлă, тараватлă, туйăмлă пулма пĕлнишĕн.

Тавах сана, чăваш хĕрарăмĕ, хастар та маттур чăваш хĕрĕсемпе чăваш ывăлĕсем çуратса ӳстернĕшĕн. Вĕсене тăван чĕлхене мантарманшăн.

Эс пур чухне, эс сывлана чухне, эс ырмиканми вăй хурса ĕçленĕ чухне, эсĕ хĕвел пек ăшăтнă чухне, эс сипетлĕ çăлкуç пек тапса тăнă чухне чăваш çĕрĕ нихăçан та пĕтмĕ. Вăл вăйланса, çирĕпленсе, мăнаçланса, ирĕкленсе çеç пырĕ!

Эсĕ, чăваш хĕрарăмĕ, чăваш çĕрĕ-шывĕн ятне-чапне пĕтĕм тĕнче шайне çĕклеме пулăшатăн.

Ĕмĕр-ĕмĕр сывлăхлă пул, чăваш хĕрарăмĕ!

Ăнăçу та иксĕлми телей сана, чăваш хĕрарăмĕ!



***Телей***
***саманчёсем,***
***мёншён***
***ытла та***
***кёске-ши эсир?..***

* * *

Телей саманчĕсем, мĕншĕн ытла та кĕскеши эсир? Аслатиллĕ çумăр вăхăтĕнчи йăлтăрялтăр çиçĕмĕн питĕ хăвăрттăн куç умĕнче мĕлтлетсе илетĕр те, çут тĕнчен тĕпсĕр кĕсйинче çухалатăр.

Мĕншĕн, мĕншĕн пĕрре те шеллеместĕр эсир мана, телей саманчĕсем? Мĕншĕн килсессĕнех, чылай хăналанмасăр ман чунăмран тӳрех пăрахса тарма васкатăр? Ирхи илемлĕ шуçăм евĕр хуллен килсе кĕретĕр те ман пурнăçа, сар хĕвелĕн пĕрремĕш ачаш шевлисем тавралăха ыталасанах шур тĕтрене ирĕлтернĕн ерипен ирĕлетĕр.

Çапса çăвакан çумăрăн пĕр пĕчĕкçĕ пĕрчийĕ кĕрлесе малтан-мала ыткăнакан юханшывпа пĕрлешнĕн, эсир те, эсир те манран уйрăлса таврăнми, таврăнми мана пĕчченлĕхре хăваратăр.

Çап-çут куçкĕски пек яп-яка та тип-тикĕс çуталса хăй патне илĕртекен кӳлĕ сăн-питне хутран-ситрен вĕçсе килсе хумхантаракан чăркăш çиллĕн тарса пытанатăр манран çыран хĕрринче ӳсен тĕмсем айне, телей саманчĕсем...

Вăхăт-вăхăт эсир манран кăнтăралла кикак! кикак! тесе вĕçекен хуркайăксен çунаттисен сулăмĕнчен те хăвăртрах çухалатăр...

Анчах та сире, телее, самантăн хумĕсенче пытаннăскерсене, çĕнĕрен те çĕнĕрен аса илӳсенче каялла тавăрма пулать. Сирĕн асамлă пылакăра çĕнĕрен те çĕнĕрен тепĕр хут туйма пулать.

...Телей саманчĕсем, мĕншĕн, мĕншĕн, мĕншĕн ытла та кĕске-ши эсир?

Тен, эпĕ йăнăшатăп? Тен, пачах урăхла?
Тен, сирĕн кĕскелĕхĕрте вăрттăн илемлĕхĕр?
Тен, сирĕн кĕскелĕхĕрте асамлă çепĕçлĕхĕр?
Тен, сирĕн кĕскелĕхĕрте пылак ачашлăхăр?
Тен, сирĕн кĕскелĕхĕрте иксĕлми çирĕп вăйăр?..

* * *

Вăхăт-вăхăтпа хама пас тытнă шап-шурă турат çинче лăпчăнса, çунатăмсене ӳтĕм çумне çат çыпăçтарса лартнă пĕчĕкçĕ кăсăя пекех туятăп. Ман йĕри-тавра сип-сивĕ, шăнса пăрланнă тĕнче. Çав тĕнче варринче эпĕ, пĕчĕкскер, мĕскĕнскер, хевтесĕрскер, никама та кирлĕ марскер пĕр-пĕччен ларатăп. Хама хам шеллесе вилетĕп çав самантсенче...

Тавра — шурă, шурă, шурă, сивĕ, сивĕ, сивĕ, ăнчах никам та ăнланмасть çакна, никам та мана шеллемест.

Вăхăт-вăхăтпа вара эпĕ — ăмăрткайăк. Ту тăрринчен çунатăмсене хыттăн çатлаттарса, пуçăма çӳллĕ çĕклесе, мăнаçлăн çак тĕнчене сăнатăп: çĕр çумĕпех шуса иртекен кăп-кăпăшка шур пĕлĕтсем, таçта инçетре — çинçе çип евĕр юхакан юханшывсем, вăрмансем, ялсем, хуласем — пĕтĕмпех ман ура умĕнче. Эпĕ — хуçа. Кăкăр туллин янкăр уçă сывлăшпа сывлатăп. Эпĕ — паттăр, эпĕ — хастар, эпĕ — маттур. Çак самантсенче эпĕ хампа мухтанатăп.

Хамран вăйсăрскерсене шеллеме, хӳтĕлеме, сыхлама хатĕр эпĕ.

Вăхăт-вăхăтпа вара эпĕ — шур акăш. Илем-

лĕ çунатăмсене ирĕклĕн сарса кăн-кăвак тӳпере вĕçетĕп. Сар хĕвел патнелле пĕр ăнтăлатăп, тепĕр тӳпере-тинĕсре вĕçсе-чӳхенсе киленетĕп. Çут çăлтăрсемпе тупăшма тăрăшатăп. Хама сар хĕвелпе, сар уйăхпа, çут çăлтăрпа танлаштаратăп. Кăвак тӳпере чĕрем никам илтмен çĕнĕ ирĕклĕх юррине кĕвĕлет, ăна пĕтĕм тĕнчене парнелет. Кăмăлăм çĕкленӳллĕ, чунăм савăнăçлă, чĕрем хаваслăн тапать. Çак самантра эпĕ хама питĕ юрататăп.

Юрату туйăмĕпе çунса курман çынсене пылак, чуна килентерекен туйăма пĕр шелсĕр валеçме хатĕр эпĕ.

Вăхăт-вăхăтпа эпĕ — хура курак. Çиллес сĕн пурин çине те тинкеретĕп. Хура çунатăмсене сарса пĕр вырăнтан тепĕр вырăна тарăхса вĕçетĕп. Кашни тĕл пулакана тытса çурма эп хатĕр. Пĕчĕк куçăмсем усал, сивĕ хĕм сапаççĕ, чĕрем курайманлăхпа тулнă. Пĕтĕм тĕнче халь хуп-хура... Çакнашкал самантсенче эпĕ хама кураймастăп, юратмастăп.

Сивĕ туйăмпа тулса ларнăскер, эпĕ пĕтĕм тĕнчене ылханма хатĕр.

...Шел, кун-çулăма шур акăш евĕр хаваслăн та савăнăçлăн вĕçсе ирттермелле туман мана çутçанталăк. Этем туса çуратса янă та, этем пулсах, тем те тӳссе, тем те чăтса пурăнса ирттермелле ĕмĕрĕме...

Тен, хурлану мар, тен, телей çак тĕнчене Этем пулса килни?

* * *

*Юратнӑ мӑшӑрӑма*

Эпӗ хам телейрен хам хӑратӑп... Ытла та телейӗм пысӑк-ҫке, ытла та телейӗм ырӑ-ырӑҫке, ытла та телейӗм пылак-ҫке!!! Ҫут тӗнче уҫлӑхӗ евӗр вӗҫӗ-хӗррисӗр ҫутӑ телейӗм хам сиссе юлаймасӑрах ирхи варкӑш ҫил пӗр шелсӗр кӑвак тӗтрене сирсе чечеклӗ улӑх тӑрӑх сапаланӑн вӑл ман пурнӑҫран сирӗлесрен...

Пушӑ чуна ҫӗнӗрен сан евӗр пулса килсе тултарнӑ черчен те савӑк телейӗм кӗрнеклӗ те мӑнаҫлӑ юман вулли ҫумӗнчен ҫӗр пичӗ ҫине ӗмӗрлӗхех татӑлса ӳкекен пӗр пӗчӗк емешӗл ҫулҫӑн манран яланлӑхах таврӑнми ҫухаласран...

Кӑмӑлӑма ҫӗклентерекен, ҫӗнӗ вӑйпа, ӗмӗтпе, тӗллевпе пурӑнма хавхалантаракан таса телейӗм кӗрхи сивӗ ҫил ытамӗнче нихӑҫан чӗрӗлейми шап-шур чечекӗн пуҫне пӗксе манра вилесрен...

Кун ҫутине, ҫӑлтӑрлӑ янкӑр сенкер тӳпене, ӗмӗрлӗхе ӗненме хистекен ырӑ-ырӑ телейӗм сип-симӗс курӑк ҫиййӗнче шӑрҫаланса ялтӑракан пин-пин тап-таса сывлӑм пӗрчиййӗ сар хӗвел хӗрӳ тути ҫинче пӑсланса типнӗн манран уйрӑласран...

Эпӗ чӑнласах, мӗнпур чун-чӗререн хамӑн сӑмахпа хаклайми, тарасапа виҫейми, ахахмерченпе танлаштарайми ҫепӗҫ те илемлӗ телейӗм ҫухаласран хӑратӑп.

Аран тепӗр хут тупнӑ телейӗм, пурӑнсам манра!

Телейӗм, сана ҫухатасран хӑратӑп, ҫӗнӗрен пурнӑҫ тӗллевӗ пӗтесрен, ҫак тулли тӗнчере пушӑ-пушӑ-пушӑ чунпа тӑрса юласран хӑратӑп...

* * *

Кирлĕ мар сăмахсем,
Вĕсемсĕрех ăнлантăм
Эс текех мана савманнине —
Чуптумарăн мана тĕл пулсан.

Ан калах сăмахсем,
Вĕсемсĕрех ăнкартăм
Эс мана текех савманнине—
Сиввĕн эс тинкертĕн куçăмран.

Кĕтместĕп сăмахсем,
Вĕсемсĕрех эп туйрăм
Эс текех мана савманнине —
Чĕнмесĕрех эс иртрĕн ман çумран...

* * *

Сана ан кур тени —
Ик куçăма куç хăвăлĕнчен
Чакаласа кăлар тени.

Санпа ан калаç тени —
Чĕлхеме шăлпа çыртса
Касса çăтса яр тени.

Сан ятна ман тени —
Чĕреме чĕрĕлле кăкăрăмран
Тăпăлтарса кăларни.

Сана ан юрат тени —
Мана чĕрĕлле шăтăк чавса
Çĕр ăшне пытарни...

* * *

Мĕншĕн эс ман пата паян пĕрех хут пытăн-ши? Ытахальтен сăмах чĕнсе чĕреме çĕнĕрен хускатрăн-ши? Иртсе кайнă телейлĕ самантсене тепĕр хут аса илтертĕн-ши?

Ним пулман пек çумран асăрхамасăр иртнĕ пулсан, лайăхрах пулĕччĕ, тарăхмăттăм сана, тав тунă çеç пулăттăм. Чĕреме ăнлантарăттăм: ăнлансам, вăл питĕ тĕрĕс турĕ мана асăрхамасăр. Ăшăмра сана ырлăттăм çеç.

Хăв ыррине кăтартса, мана сăмах чĕнтĕн те, вăхăт тупса шăнкăравла терĕн те, юрату вилнĕ пулсан та пирĕн хушăра, каллех хыпса çунма тытăнтăм, каллех асамлăха ĕненме пуçларăм.

Мĕншĕн, мĕншĕн ман çул çинче каллех эс тĕл пултăн...

* * *

*Леня Капитонова,*
*студент чухнехи тусăма,*
*çар тухтăрне.*

Ку çемçе пукан манман-ха сана. Тин çеç эс ун çинче ларattăн. Вăл сан ăшшуна усрать.

Ку сарă сĕтел те асрах тытать сана. Пуçна хĕресленĕ аллусем çине хурса куç сиктермесĕр ман куçран тинкеретĕн. Кăвак куçусенче ачашлăх, туслăх, ăнлану. Кăвак куçусенче — асаилӳсем. Кăвак куçусенче — эпĕ, вунçиччĕри хĕр пĕрчи, айванскер, пурне те ĕненекенскер, ырăпа усал мĕн иккенне пĕлсе çитейменскер. Кăвак куçусенче — эпĕ, вăтăр пиллĕкри хĕрарăм, пурнăç тутине астивсе курнăскер, вутпа çулăм витĕр тухнăскер, çавах ырра ĕненекенскер, юратăва мухтаканскер.

Кăвак куçусенче — уйрăлу... унтан, çулталăкран каллех тĕлпулу...

Ку çутă пӳлĕм те тулса ларнă санпа. Сывлăшра санăн куçа курăнман чуну хуçаланать, вăл халь мана ытарлăн çупăрлать, асаилӳ тĕнчине йыхăрать. Ăшăмра пылак туйăм вылянать. Тавах сана уншăн.

Тепĕр çул, тăван таврана канма çаврăнса çитсен, ан ман кĕрсе тухма хăнана, хумхатса хăварма, çамрăклăхăма аса илтерсе чунăма...

* * *

Ултав, ултав, пĕтĕмпех ултав. Ачаш куллу — ултав. Юратуллă сăмахусем — ултав. Çепĕç сĕртĕнĕвӳсем — ултав. Утту, кашни хусканăву — ултав. Ман çине шухăшлăн тинкерни — ултав. Пĕр саншăн тунсăхлатăп тени — ултав. Пĕр сан çинчен ĕмĕтленетĕп тени — ултав. Ман пурнăçра пĕр эсĕ тени те — ултав. Ĕненĕттĕм, шанчăклă туссем ĕненме памаççĕ. Сана час-часах пĕринпе, тепринпе кураççĕ...

* * *

...Юрпике терĕн-ши эпĕ? Шур юр пĕрчисенчен пухнă мăй çыххи асăнмалăх парнелерĕн мана. Нихçан ан сӳнтĕр пирĕн илемлĕ юрату тесе. Çуркунне çитрĕ те, сар хĕвел ирĕлтерчĕ шур юр пĕрчиллĕ мăй çыххине. Çут тумла пулса ӳкрĕç юр пĕрчисем çĕр çине. Тумласемпе пĕрле юратăвăмăр та сăрхăнса кĕчĕ çĕр ăшне...

...Уйăхпи терĕн-ши эс мана? Сывлăм пĕрчисенчен пухнă ал çыххи тăхăнтартрăн аллă-

ма. Çутă та таса пултăр пирĕн шевлеллĕ юрату тесе. Ирхине сар хĕвел тӳпене шуса хăпарчĕ те чуптуса типĕтрĕ сывлăм пĕрчисене. Пăс пулса вĕçрĕç вĕсем шур пĕлĕтсем патне. Пăспа пĕрле юратăвăмăр та çухалчĕ çӳл тӳпере...

...Çупике терĕн-ши эпĕ? Улăхра ӳсен утмăлтурат чечекĕсенчен пуçкăшăль çыхса тăхăнтартрăн пуçа. Çак черчен чечексем пек ĕмĕр-ĕмĕр чĕп-чĕрĕ пултăр пирĕн сенкер юрату тесе. Кĕрхи сивĕ çил кассăн-кассăн вĕçсе килсе ытамларĕ те вĕсене, шанчĕç чечексем, пĕкрĕç пуçĕсене. Çеçкесемпе пĕрле пирĕн юрату та куçне хупрĕ ĕмĕрлĕхе...

* * *

...Мĕн пулса иртет манпа — эп ăнланмастăп. Эп калех хăпартланса юрлатăп. Эп каллех чунтан хыт савăнатăп. Никамран куçа тартмасăр эп кулатăп. Шăнкăр-шăнкăр сассăма итлесе эп киленетĕп. Тыттарнăн аллăма сар хĕвеле юрла-юрла кулатăп.

Чунăм ирĕклĕ-çке манăн, ирĕклĕ!!! Юрату читлĕхĕн алăкне уçайрĕ вăл!!! Чĕремпе тавлашса, чĕреме çĕнтерсе чунăм вĕçрĕ ирĕке. Çӳл тупере вăл ярăнса вĕçет. Шур пĕлĕтсем çине ларса канать. Çут çăлтăрсем патне вăл ăнтăлать. Мĕн тери тутлă иккен вăл ирĕклĕх!!! Мĕн тери савăк иккен тĕнче асаплă юрату тыткăнĕнчен хăтăлнă хыççăн!!! Эпĕ чĕрем çăнчăрланă юрату тыткăнĕнчен хăтăлайнишĕн хăпартланса юрлатăп.

...Мĕн пулса иртет манпа — эп пĕртте ăнланмастăп.

* * *

Чунăма çич çăрапа питĕрсе лартассăм килет, никам та ан кĕрейтĕр уçса, никам та ан курайтăр ăна. Пĕр çын та ан пĕлтĕр чунăм еплерех пурăннине, вăл еплерех асапланнине, унпа мĕн пулса иртнине. Йĕрет-и ман чун, юрлать-и ман чун, кăшкăрать-и ман чун — çавах мар-и сире?

Турри урăхла çырнă та, чунăм ал тупанĕ çинче, чунăм—куçăмсенче, чунăм яр уçă çын çинче. Чунăма çич çăрапа питĕрсен те, хĕлхемĕ çич çăрана çунтарса ярать, шалтан тулалла тапса тухать. Чунăм çуталса çеç тăрать. Курăр! Курăр! Ак вăл сирĕн умăрта ман чун! Сурас текенни сурма пултарать, усалли хуратма пултарать, хаярри хаяр вăрлăхĕ сапма пултарать. Сурас текенни — суртăр, варалаканни — вараланăр, хаярри — вăррине актăр. Анчах пĕлĕр пурте: ман чун ача куççулĕ евĕр тап-таса. Мĕн чухлĕ ăна хуратĕç — çавăн чухлĕ вăл шуралĕ.

* * *

Эп сана шырарăм тĕнчен çич кĕтессинче. Эп сана шырарăм çичĕ тинĕс леш енче. Эп сана шырарăм çичĕ утрав леш енче. Эп сана шырарăм çичĕ пĕлĕт тăрринче.

Эс çӳренĕ иккен манпа юнашар. Эсĕ пулнă иккен манпа юнашар. Епле-ха çак таранччен эп сана курман? Епле-ха çак таранччен эп савман?

* * *

Пин те пин сар чечек ӳсет улӑхра. Пин те пин ӑш сӑмах упранать чунра. Пин те пин сар чечеке пухрӑм ытама. Пин те пин ӑш сӑмаха ӑшӑтрӑм чунпа. Пин те пин сар чечекпе ҫитрӗм сан пата. Пин те пин сӑмаха парнелерӗм сана. Пин те пин сар чечеке илмерӗн алран, пин те пин сӑмахӑма патӑн каялла.

Пин те пин сар чечеке ывӑтрӑм ҫут кӳлле, пин те пин ӑш сӑмахӑма вӗҫтертӗм ҫилпе.

## ТУПА ТУНИ

Атӑл. Каҫ. Ҫап-ҫут ҫӑлтӑрлӑ тӳпе. Ӗмӗте пурнӑҫлакан юпа. Сар хӗвел хӗрӳлӗхне сапаласа пӗтермен юпа ҫумӗнче иксӗмӗр тӑратпӑр. Питӗмсемпе юпана сӗртӗннӗ хамӑр, лӑпкӑ каҫ шӑплӑхне итлетпӗр. Сылтӑм аллу юпа ҫинче, сулахай аллу пилӗкӗм ҫинче. Сулахай аллӑм юпана ыталать, сылтӑм аллӑм сана ыталать. Сӗм каҫ тӗслӗ куҫусем ман куҫсене тинкереҫҫӗ. Мӗн тери ырӑ-ҫке ҫак самантра ҫут тӗнче! Чунӑм асамлӑх тӗнчинче вӗҫсе ҫӳрет. Эпӗ эсӗ илтмелле ҫеҫ шӑппӑн пӑшӑлтататӑп:

— Паянтан пуҫласа куҫӑмсем куҫусене ҫеҫ тинкерччӗр. Чӗрем пӗр саншӑн ҫеҫ ытарлӑн та канӑҫсӑррӑн таптӑр, хӗмленсе-хӗмленсе ҫунтӑр, ыратса-ыратса пӑшӑрхантӑр. Аллӑмсем пӗр сан ҫӳҫӳсене, питне, аллусене, ӳтне ачашлаччӑр. Тутам пӗр сан тутуна ҫеҫ ҫепӗҫҫӗн чуптутӑр. Паянтан эсӗ пӗр манӑн, паянтан эпӗ пӗр санӑн. Куҫӑмсем урӑх нихӑҫан та пӗр арҫынна та ан илӗртчӗр. Вӗсем паянтан ӗмӗр-ӗмӗр пӗр сан валли ҫеҫ асамат

кĕперĕн ялтăртатчăр, ялтăр çиçĕмĕн çиçчĕр, çепĕççĕн çуталччăр.

Пĕр сана çеç юратас килет манăн паянтан. Пĕр сана çеç хампа юнашар курас килет паянтан. Тӳпери сар уйăх пире пиллетĕр, сар хĕвел хăй хӳттине илтĕр, çут çăлтăрсем савса сăначчăр, çил пире май вĕртĕр, çумăр пире ан сĕртĕнтĕр, çăлсем сипетлĕ шывпа хăналаччăр, вăрман пуянлăхне патăр, çеçенхирсем ирĕклĕхе савма вĕрентчĕр, кайăксем юррисемпе илĕртчĕр. Çĕр-аннемĕр чĕрçи çинче сиктерсе килентертĕр.

Тупа тунă сăмахăмсене аллусене çепĕççĕн чăмăртаса, авăр евĕр куçусене кăмăллăн тинкерсе çирĕплететĕп.

Мăнаçлă Атăл хĕрринче тӳпенелле кармашса ларакан ĕмĕте пурнăçлакан юпа тупана пурнăçа кĕрттĕр.

Тупа сăмахĕсем çĕре ӳксе ан çухалччăр, сан чĕрӳне кĕрсе çирĕп вырнаçчăр, хĕп-хĕрлĕ юрату чечекĕ пулса ĕмĕр-ĕмĕр ешерччĕр...

* * *

Тĕттĕм пĕлĕт,
Хура пĕлĕт
Таврана хуплать.
Тĕттĕм пĕлĕт,
Хура пĕлĕт
Аçа çаптарать,
Çумăр çутарать.
Тĕттĕм туйăм,
Хура туйăм
Чуна çупăрлать.
Тĕттĕм туйăм,
Хура туйăм

Чунăма çурать,
Куççуль юхтарать.
Тĕттĕм пĕлĕт,
Хура пĕлĕт,
Шыв пĕрчи пулса,
Ӳкĕ, ӳкĕ, ӳкĕ, ӳкĕ
Çĕр питне çуса.
Тĕттĕм пĕлĕт,
Хура пĕлĕт,
Юханшыв пулса,
Кайĕ, кайĕ, кайĕ, кайĕ
Инçете юхса.
Сар хĕвелĕ çиçсе тухĕ
Пĕлĕт хыçĕнчен,
Асамат кĕперĕ карĕ
Çут тумласенчен...
Тĕттĕм туйăм,
Хура туйăм,
Çут ахах пулса,
Юхĕ, юхĕ, юхĕ, юхĕ
Чуна тасатса.
Тĕттĕм туйăм,
Хура туйăм,
Шывпа пĕрлешсе,
Ишĕ, ишĕ, ишĕ, ишĕ
Тĕнче хĕррине.
Чĕрем кулĕ
Сар хĕвелĕн
Ман куçăмсенчен.
Асамат кĕперĕ карĕ
Çут куççульсенчен.

* * *

ПӖЧЧЕНЛӖХӖМ —
Манӑн ХӖРЕСӖМ.
Ыратӑвӑм —
Манӑн телейӗм.
Пӗчченлӗхе — хӗресӗме —
Йӑтса эп ҫӳллӗ ту
енне утатӑп.
ПӖЧЧЕНЛӖХПЕ—ХӖРЕСӖМПЕ—
Эп ҫӳллӗ ту ҫине
Хӑпаратӑп.
ПӖЧЧЕНЛӖХӖМ — ХӖРЕСӖМ—
Хулпуҫҫисем ҫинче
Арман чул евӗр выртать.
ПӖЧЧЕНЛӖХӖМ — ХӖРЕСӖМ —
Яштака пӗвӗме ҫинҫе хуллӑн авать.
Ҫӳлле ту ҫине хӑпарнӑҫемӗн
Йывӑрлансах пырать!
Сывлӑшӑма пӳлет,
Кӑкӑрӑма хӗсет!
Ҫапах хал ҫитерсе
Ҫӳллӗ ту
тӑррине хӑпаратӑп,
Шӑтӑк чавса
ПӖЧЧЕНЛӖХӖМЕ—ХӖРЕСӖМЕ—
Вырнаҫтарса лартатӑп.
Хама хам
ПӖЧЧЕНЛӖХӖМ — ХӖРЕСӖМ —
Ҫумне йывӑҫ пӑтапа
Ҫапса хуратӑп...
ПӖЧЧЕНЛӖХӖМ —
Манӑн ХӖРЕСӖМ!
Ыратӑвӑм—
Манӑн телейӗм!

* * *

Кирлĕ мар ман чунпа выляма,
Кирлĕ мар.
Ман чун мечĕк мар.
Ман чун тетте мар.
Ман чун пукане мар.
Кирлĕ мар ман чунпа выляма,
Кирлĕ мар.
Ман чун ытла та ачаш,
Ман чун ытла та йăваш.
Ман чун ытла та чăваш.
Вăл çут тумла пек.
Вăл çут тĕкĕр пек.
Вăл çут ахах пек.
Ăна ăнсăртран амантсан,
Вăл чăл-пар саланать.
Кирлĕ мар ман чунпа выляма,
Кирлĕ мар.

* * *

Эсĕ, эсĕ, эсĕ инçетре чухне
Куллăм та тутама ăшăтмасть.
Çăлтăрсен юрри те манра янрамасть.
Эсĕ, эсĕ, эсĕ инçетре чухне
Хĕвел те салхуллăн пăхать,
Шур пĕлĕтсем хыçне пытанать.
Эсĕ, эсĕ, эсĕ инçетре чухне
Уйăх та кĕмĕл киммине тытмасть.
Тинĕсре-тӳпере ярăнмасть.
Эсĕ, эсĕ, эсĕ инçетре чухне
Хурăнсем те шăппăн кĕл туса юрламаççĕ,
Чĕвĕлти чĕкеçсем те шыв сыпнăн лараççĕ.
Эсĕ, эсĕ, эсĕ юнашар пулмасан
Ĕмĕт те лăпкăн çыврать.
Пурнăç та пĕтнĕн туйнать.

* * *

Вăрă вырăнне
акса хăварăр мана
çĕр ăшне
кĕркунне.
Шăтса тухăп эп,
юр кайсан,
асамлă юрату
чечекĕ пулса
çĕр пичĕ çине
çуркунне.
Ман çумран
иртен яшсемпе хĕрсене
парнелĕп эп
юрату çеçкисем.
Илем, телей
хуçаланччăр
çамрăк чунсенче.
Чĕрисенче
чĕртĕп эп
юрату хĕлхемне.
Тархасшăн,
акса хăварăр мана
асамлă юрату вăрри
вырăнне
çĕр ăшне
кĕркунне...



***Сан ултаву сивĕ хĕлĕн шăнтса лартрĕ чĕрене...***

* * *

Сана курсан текех
кӑвайтӑм—куҫӑм
хӗм сапса ҫунмасть —
вӑл кӗлленчӗ.
Сан ултаву
ҫапса ҫӑван ҫумӑррӑн
шелсӗр сӳнтерчӗ
куҫсен вучахне...
Санпа калаҫнӑ чух текех
чӗлхем ҫепӗҫ сӑмахсемпе
сана лӑплантармасть —
вӑл ҫыхланчӗ.
Сан ултаву
хӗрӳллӗ хӗвелӗн
шелсӗр типӗтрӗ
чӗлхем ҫӑлкуҫне...
Санпа тӗл пулсан текех
чӗрем савӑнса тапмасть—
вӑл пӑрланчӗ.
Сан ултаву
сивӗ хӗлӗн
шӑнтса лартрӗ
чӗрене...

* * *

Тӗксе яр мана
Хӑв ҫумӑнтан,
Тӗксе яр!
Эп халь нимрен те хӑрамастӑп.
Эп текех
Айван хӗр мар!
Тӗксе яр мана,
Тӗксе яр!

Тĕксе ярсан та,
Эп текех кулянмăп,
Тĕксе ярсан та,
Эп тӳрех сиксе тăрăп,
Çирĕпленнĕ çунатăмсене сарса
Сенкер уçлăхалла эп вĕçĕп.
Ирĕклĕхе кăкăр туллин сыпса
Эп вĕçĕп, вĕçĕп, вĕçĕп...
Эп халь çунатлă!
Эп халь вăйлă!
Эп халь пурнăç курнă
ХĔРАРĂМ!
Тĕксе яр мана,
Тĕксе яр!
Эс тĕкни халь
МАНШĂН
Ним те мар!

* * *

...Сана тĕл пулмассерен куçусене тӳрремĕн тинкерме вăтанатăп. Вăтанатăп çеç мар, хал çитерейместĕп. Темле хам та ăнланса çитеймен чĕремри туйăм куçăмсене айккинелле туртма хистет. Çук, çук, сана ăнтан каймалла юратнăран сан ăссăрлатакан, хăй авăрне туртакан сĕм каç евĕрлĕ куçусене тинкерме вăтанмастăп эпĕ. Пачах урăхла. Эсĕ кашни чипер пике хыççăн сĕтĕрĕнме хатĕрришĕн, кашни яштака кĕлеткеллĕ, хитре сăн-питлĕ хĕре пĕр каçлăха та пулсан хăвăн çирĕп ытамунта ачашлама хатĕрришĕн... Манăн сана пĕр хама çеç юраттарас килет, пĕр ман тĕллевсемпе, ĕмĕтсемпе пурăнтарас килет. Пĕр ман ӳтĕме, çӳçĕме, тутама, куçсене, аллăмсене сĕртĕнте-

рес килет. Эсӗ вара пӗр манпа ҫеҫ ҫырлахма пултараймастӑн. Кашни илемлӗ пикене саманлӑха та пулсан хӑвӑн тӑвасшӑн. Пылак ҫырласене умлӑн-хыҫлӑн ҫинӗн, пӗр чипер хӗр хыҫҫӑн тепӗрне улӑштаратӑн. Самантлӑх юратӑвӑн пылакӗ илӗртет сана, хавхалантарать, ҫавӑнпа та кун-ҫулунта ҫӗнӗлӗх хыҫҫӑн ҫӗнӗлӗх шыратӑн.

Эпӗ вара ытла та нумай кӗтетӗп пулмалла санран, нумай ыйтатӑп. Пӗр хамӑн ҫеҫ тӑвасшӑн сана, хам ҫеҫ санпа хуҫаланасшӑн.

Тен, ҫав чӗре тӗпӗнче пурӑнакан сӑваплӑ юратӑвӑм сан куҫусене тӳрремӗн пӑхтармасть мана, ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе ҫывӑраймасӑр пӗр сан валли хатӗрленӗ чи ҫепӗҫ сӑмахсене мантарать. Тен, ҫавӑнпа эпӗ чӗремри туйӑма хамран та, санран та пытаратӑп, ӑна ҫунаттисене сарса ирӗклӗн вӗҫме чӑрмантаратӑп.

* * *

Ҫак саманта эп кӗтнӗччӗ... Сана пӗрре курсах килӗштерес саманта... Халӗ вара эпӗ пачах урӑх саманта кӗтетӗп: сана савма пӑрахас саманта.

Чунӑмри туйӑма эпӗ кунран-кун ерипен вӗлертӗм. Ӑнланӑн-ши эсӗ мана? Манӑн сан умӑнта урӑх пӗрре те мӗскӗнленес килмерӗ. Сана чунӑмпа парӑнас килмерӗ. Эпӗ хамӑн туйӑмӑн чури пуласран хӑрарӑм. Юратӑвӑма вӗлертӗм те, ҫӗнтерӳҫӗ пулса тӑтӑм. Манӑн савӑнмалла: эпӗ ирӗклӗ. Ҫӗнтерӳ пирӗнче сиксе ташламалла, симпыл ӗҫсе киленмелле. Эпӗ вара хама пӗрре те телейлӗ тесе калама пултараймастӑп. Эпӗ юратӑва ҫӗнтертӗм! Анчах...

эпĕ çĕнтерӳçĕ мар! Юрату вилчĕ те, пурнăç та тӳрех тĕксĕмленсе ларчĕ. Ăнтăлу та пĕтрĕ, шанчăк та тӳрех сӳнчĕ.

Эсĕ мана парăнтарса хăв çĕнтерӳçĕ пулма ĕмĕтленеттĕн... Халь акă эсĕ те, эпĕ те çĕнтерӳçĕ пулаймарăмăр.

Каласам, халь кам пиртен иксĕмĕртен телейлĕрех?

* * *

Эпĕ сана юрататăп тени суя. Сан ытамунта ачашланни те, сана васкамасăр чуптуни те, эпĕ ĕмĕрлĕхех санăн тени те. Пĕтĕмпех, пĕтĕмпех суя... Çак сăмахсем сана кирлĕ, çавăнпа калатăп кунсерен сана эпĕ вĕсене. Çак сăмахсем саншăн сывлăш пек, шыв пек. Эсĕ кашни кун вĕсене манран илтме хăнăхнă. Эпĕ хам хăнăхтартăм сана.

Халĕ эсĕ вĕсемсĕр пурăнаймастăн. Мана йывăр чухне эс çумра пултăн: ĕçпе те, сăмахпа та пулăшрăн. Халь эпĕ сана сутма пултараймастăп. Ирĕксĕрех, суйнине пĕлсе тăрсах, эсĕ чи паттăр арçын, чи мăнаçлă, чи маттур, чи илемлĕ арçын тетĕп. Те тĕрĕс, те йăнăш тăватăп, кам пĕлет?

* * *

Кĕленче пек ванчĕ пурнăçăм эс кайсан. Сӳнсе ларчĕ иксĕмĕр чĕртнĕ вучах. Ах, анчах. Ăнланаймарăмăр пĕр-пĕрне. Хаклаймарăмăр пĕр-пĕрне. Пурнăçăм ванчăкĕ çинче текех хĕвел вылямасть. Кĕлленнĕ вучах çийĕн хавас-

лăн хĕлхем ташламасть. Ах, анчах. Пĕлеймерĕмĕр юратăва сыхлама. Тăрăшмарăмăр телейĕме упрама.

* * *

Шап-шурă, çеп-çемçе тĕк евĕрлĕ кăпăшка юр пĕрчисем хуллен-хуллен çӳл тӳперен вĕççе анса манăн куç хăрпăкĕсем çине лараççĕ. Пĕчĕкçĕ çут çăлтăрăн йăлтăртатса илеççĕ те ерипен сӳнеççĕ, унтан пĕчĕкçĕ çутă куççуль тумламĕсем пек пит тăрăх юхаççĕ...

Йĕри-таврара шап-шурă чĕнтĕрлĕ пĕркенчĕк вырттнăнах туйăнать. Вĕлтĕр-вĕлтĕр çаврăнса анаççĕ тӳперен юр пĕрчисем. Хĕл мучи хăйĕн тĕпсĕр миххине салтса янă та, çыхма манса кайнă. Шур акăш тĕкĕсем евĕрлĕскерсем, çеп-çемçе юр пĕрчисем сывлăшра çаврăна-çаврăна илеççĕ, темле асамлă ташă ташлаççĕ. Ывăнса çитнĕ хыççăн канлĕн ман алăсем, куç хăрпăкĕсем, йывăççем, картасем, çуртсем тата çĕр çине майлашса выртаççĕ.

— Хĕл çитрĕ! Хĕл çитрĕ! Тинех чуна çуракан, кăмăла пусăрăнтаракан хура кĕркунне иртсе кайрĕ. Эй, тĕнче, савăн! Шурă-шурă асамлă юмах каласа парĕ сана хĕл мучи! Шап-шурă сăпка юрри юрласа çывăрттарĕ вăл çĕр-аннене. Лăпкăлăхпа та канлĕхпе тулса ларĕ çутçанталăк!— савăнăçне пытараймасăр хăвăрттăн-хăвăрттăн тапрĕ кăкăрăмри чĕре.

Урасем вара, ывăнма пĕлменскерсем, çынсем утса такăрлатнă сукмакпа хавхаланса малалла васкаççĕ. Куçăмсем, çутçанталăк илемĕпе киленсе, тавралăха сăнаса савăнаççĕ, вĕсенче халь мĕн пур хĕл хитрелĕхĕ пухăннă тейĕн.

Куçăмсем шур пĕркенчĕк айĕнче шăппăн laракан хурăнсем çине тинкерсе ялкăшаççĕ. Аллăмсем шур юра тытса пĕчĕк çаврашкасем йăвалаççĕ, шурă пĕрчĕсене тӳпенелле ывăтаççĕ.

Чĕрере çуралнă çепĕç юрă ирĕкелле ăнтăлать, пĕтĕм çут тĕнчене хăйĕн ачаш ытамне илет.

Асамлă кĕвĕ чуна хăпартлантарать, кăмăла йӳле ярать. Пурăнас килет, çак çут тĕнчепе пĕрре те ĕмĕрлĕхе сывпуллашас килмест. Тĕлĕнмелле асамлăха вĕçĕ-хĕррисĕр тăсас килет...

Сасартăк, çуталса çиçекен куçсем, ĕненмесĕр малалла тĕлĕнсе тинкереççĕ, пĕр вăхăт мăчлатса илеççĕ, вăйланса çунма пуçлать вĕсенчи хĕлхем, унтан те вăтаннипе, те «шурă мамăк» йывăрлăхне чăтаймасăр ерипен хупănаççĕ. Кĕтменлĕхпе хăюсăрланнă чĕре кăкăрăмра теме кĕтнĕн хыттăн тапма чарăнать. Урасем, тин çеç çăмăллăн çĕр çийĕн вĕçсе утаканскерсем, икĕ чул юпа евĕр шак хытса лараççĕ, тăрăшсан та вырăнтан тапратаймăн вĕсене.

— Хăюллăрах пул, ан хăра, ара, умăнта чун савни тăрать-çке,— хавхалантарать юратăвăм чĕрене. Чунăм тинех патварланса куçĕсене уçса ярать, чĕреме чун савни ытамне ыткăнтарать. Яр уçăлнă куçăмсем çынсем хушшинче чун савнине шыраççĕ. Чĕрери хĕлхем пĕр вăйланать, пĕр лăпланать. Урасем вара савнине хирĕç хăвăрттăн васкаса ăнтăлаççĕ.

...Анчах тин çеç умăмра тăракан савни куç умĕнчен çухалать. Мана хирĕç килекенскер кирпĕч çурт хыçнелле пытанать. Витĕр тин-

керсе те савни мана курмăш пулать. Савнин чĕри ман чĕрем евĕр юратупа йăлкăшса çунмасть. Савнине эпĕ кирлĕ мар.

Ялтăраса хĕмленекен куçăмсем тӳрех тĕксĕмленсе лараççĕ, тарасапа виçейми тунсăхпа тулаççĕ. Йĕри-таврари илем те вĕсене урăх илĕртмест. Пĕтĕм тĕнче çепĕçлĕхĕ вĕсемшĕн яланлăхах улшăнать.

Шăпчăк юррине шăрантаракан чĕрем сассине çĕтрĕ тейĕн, хăлаçланса сулăнакан çунатсем те тӳрех усăнчĕç.

— Вăл мана юратмасть, нихăçан та савмĕ, эпĕ ăна пачах кирлĕ мар,— тесе чунăм хурланса йĕрсе ярать...

* * *

Тинех хал çитерсе
сана эпĕ калатăп:
«Сана текех савмастăп».
Эп лайăх ăнланатăп,
çак шелсĕр сăмахсене
халь çăмăл мар сана
манран илтме.
Вут-пуççи евĕр çунтараççĕ
вĕсем ăш-чиккӳне.
«Эп сана текех савмастăп»
тенишĕн пĕр хăвна айăпла.
Пĕр хăвна çеç чунтан айăпла...
Сана йывăр чухне, тусусем пăрăнсан,
тăшманусем тапăнсан, эп пултăм
санпа юнашар, тупайрăм сана
хавхалантарма сăмахсем.
Мана йывăр чухне, хурлăхăм
пуçа тайнă чухне, темле

йăлăнсан та —
эс пулмарăн манпа юнашар,
йывăрлăхра хăвăрătăн
мана пĕччен,
йывăрлăхра хăв çумăнтан ятăн тĕксе.
Пĕр ăш сăмах та тупаймарăн
мана йăпатса шелleme.
Йывăрлăхра сутнă çынна
чĕрем йышăнмасть.
«Сана саватăп» теме
чĕлхем çаврăнмасть...

* * *

Эп кĕтрĕм
пысăк та илемлĕ юрату.
Ĕнентĕм:
ирĕклĕн те мăнаçлăн
вăл ман пата килессине.
Шантăм:
унпа пĕрле
çут уçлăхра
хавассăн та харсăррăн
вĕçессине.
Кĕл турăм
шанса та ĕненсе
туйăмăм
чунăмра
кун-çулне ĕмĕрлессине.
Эп кĕтсе илтĕм
пурнăçăмра
пысăк та илемлĕ юрату.
Анчах ăна
пĕлмерĕм хаклама.
Айванлăха пула
çухатрăм эп ăна

яланлăха.
Чунăмра хăварса
ырату
кайрĕ мана
пăрахса
ЮРАТУ...

* * *

Кирлех-ши
Сана
Курас,
Илтес,
Калаçас
Темен
Çынсем
Патне
Кайма?

Кирлех-ши
Сана
Ăнланман,
Кĕтмен,
Юратман
Чун савнин
Чĕрин
Алăкне
Шаккама?

Кирлех-ши
Пĕр лăпланнă,
Шăпланнă,
Канлĕхпе
Тулнă
Туйăмсен
Тинĕсне

Чунра
Тепĕр хут
Хускатма?

Кирлех-ши?..

* * *

Тинкертĕн йĕрĕнсе куçăмран,
Çавах усмăп пӳçа.
Пурнăç анне мар,
Пуçран шăлмасть ялан.
Эп те кирлĕ пулăп сана
Пурăнан пурнăçра,—
Паян мар пулсан, ыран.
Пуçна каçăртса иртрĕн çумран,
Çавах хуçмăп кăмăла.
Пурнăç атте мар,
Кĕрекере лартмасть ялан.
Эп те кирлĕ пулăп сана
Пурăнан пурнăçра.
Паян мар пулсан, ыран.
Шăпа паян ачашлать,
Ал çинче йăтать.
Ыран — çупса ярать,
Çĕр çумне çавăрса çапать...

* * *

Çумăр витĕр тухнă чух
Эс пултăн çумра.
Шывра путнă чух
Эс тăсрăн ална.
Тусем урлă каçнă чух
Пăрахмарăн мана.
Тăвăл питрен çапнă чух

Хӳтӗлерӗн мана.
Пӑрлӑ çумӑр çунӑ чух
Эс ӑшӑтрӑн чуна.
Çынсем патне çитсессӗн
Эс илтрӗн сӑмах.
Сивлерӗç мана,
Хурларӗç мана,
Вӑрçрӗç мана.
Эс илтрӗн сӑмах —
Ӗнентӗн ӑна.
Сар хӗвеллӗ кунра,
Шур пӗлӗтлӗ кунра,
Чунӑм савӑннӑ кунра
Эс илтрӗн сӑмах.
Эс сутрӑн мана!!!

* * *

Астумастӑп, хӑçан-ши санран эп сивӗнтӗм... Кирлех-ши халь аса илме хӑçан сивӗннине? Пӗр кӗнӗ юханшыва тепӗр хут кӗреймен, пӗр çунса кӗлленнӗ кӑвайта текех чӗртеймӗн.

Пӗлместӗп, хӑш самантра санран эп писрӗм... Кирлех-ши халь пӗлме хӑш самантра ютшӑннине? Мӗн пулни-иртнине каялла тавӑраймӑн, кулянсан та, макӑрсан та нимӗн те тӑваймӑн.

Пӗлместӗп, хӑш вӑхӑтра юрату çунатне хуçрӗ... Ӗмӗт тӗнчинчен çылӑхлӑ çӗр çине ӳкрӗ? Çуначӗпе хупланса асаплӑн йынӑшрӗ? Кирлех-ши халь аманнӑ çунатне сиплеме? Ӗмӗт тӳпине ӑна тепӗр хут вӗçтерме?

Астумастӑп, хӑш вӑхӑтра юрату куçне хупрӗ... Пирӗн чӗресенче ӗмӗрлӗхех вилчӗ. Пирӗн чӗресенчен тупӑк турӗ. Кирлех-ши халь пӗр

вилнĕскерне чĕртме? Пĕр-пĕрне асаплантарса çĕнĕрен çунтарма?

Пĕлместĕп, кам айăплă юрату вилнĕшĕн... Эсĕ-и, эпĕ-и е тепри? Кирлех-ши халь айăплине шырама? Мĕн пур айăпа ун çине йăвантарма?

Эсĕ те, эпĕ те питĕ лайăх ăнланатпăр: пирĕн чĕресенче çутă туйăм, асамлă туйăм нихçан чĕрĕлеймĕ...

* * *

Паян пирĕн Юрату вилчĕ. Нумай вăхăт хушши чирленĕ хыççăн унăн сăнĕ юлашки хут çуталса илчĕ. Куçĕсем инçет çăлтăрсем пек ялтăр! çиçрĕç, çут тĕнче çине тĕлĕнсе тинкерчĕç. Юрату юлашки хут кăкăр туллин сывлăш çавăрчĕ, çăмăллăн хаш! сывласа илчĕ те, вилчĕ!

Пирĕн телее, юратăвăн ачи — туслăх — юлчĕ. Вăл пирĕн куçсенчен ыйтуллăн тинкерчĕ, эпир пĕр-пĕриншĕн ют çынсем маррине ăнланчĕ те савăнăçлăн кулса ячĕ!

* * *

Хурăнччĕ эпĕ. Шурă вулăллă яштака хурăн. Симĕс çулçăсемпе шĕпĕлтетсе тӳпенелле кармашаттăмччĕ. Шухă ĕмĕтĕмсене малтан мала вĕçтереттĕмччĕ. Усал çынсем тупăнчĕç, шеллемерĕç, шурă вуллăма аврĕç. Текех нихăçан та тӳрленеймĕп тесеттĕм. Шап-шур çӳçлĕ курпунланнă карчăк евĕр тарăн шухăша путса ларма тивĕ тесеттĕм. Ыр çынсем тупăнчĕç, вуллăма патак çумне çирĕппĕн çыхса лартрĕç...

Çăлкуçчĕ эпĕ. Тăп-тăрă сипетлĕ шывлă тутлă çăлкуç. Чул татки çинчен чул татки çине шăнкăртатса сикеттĕм. Ирĕклĕ те мăнаçлă тинĕспе пĕрлешме ĕмĕтленеттĕм. Çулăма мăнă чул муклашкипе пӳлчĕç. Хура тăпрапа тăм сапса чыхлантарчĕç. Çавах чун хавалне вĕлерейменрĕç. Çĕр тĕпĕнчен тумламăн-тумламăн тапса тухатăп. Çут ахахăн-çут ахахăн пухăнса пĕчĕкçĕ çип-çинçе юханшыв пулса малаллах талпăнатăп...

* * *

Кассăн-кассăн килсе çапакан кĕрхи сивĕ çил йăрăс пӳллĕ хурăнсене лăска-лăска ерипен пĕр çулçăсăр çап-çара тăратса хăварать. Куç умне лекекен хурăнсене, çап-çара вуллисене чармакласа ларнине курсанах, шеллес килсе каять. Яштака шур хурăн сив çил ытамĕнче ытла та вăйсăртан...

Ырă та çавах. Усал умĕнче хăватсăр. Çупкăн-çупкăн пырса çапакан сив сăмахсем умĕнче хӳтĕсĕр, çап-çара тăрса юлать. Ырра шеллес килет...

* * *

Яланлăхах каятăп санран уйрăлса,
Сывлăм пĕрчи çеçке çинчен курăк çине ӳкнĕ пек.
Яланлăхах каятăп санран уйрăлса,
Сар çулçă хурăн çумĕнчен татăлса вĕçнĕ пек.
Яланлăхах каятăп санран уйрăлса,
Каснă юман çĕр çине ахлатса йăваннă пек.
Яланлăхах каятăп санран уйрăлса,
Акăшсем кĕркуннепе сывпуллашнă пек.

Эс пĕлмерĕн мана упрама.
Эс пĕлмерĕн мана ăнланма.
Эс пĕлмерĕн мана сыхлама.
Эп каятăп санран уйрăлса.
Курса юл, курса юл, курса юл,
Сывă юл, сывă юл, сывă юл,
Хăвна шеллесе, куççульна çатса эсĕ юл...

* * *

Шутласа кăларнă ĕмĕте туйăмпа хуллен сĕртĕнсе ачашласа пурăнатăп. Ĕмĕтĕм нихăçан та пурнăçланас çуккине пĕлетĕп-ха. Ĕмĕтĕм ытла та тутлă, пылак пулнăран, вăл ман чуна çырлахтарнăран унпа ниепле те уйрăлса каяймастăп. Тата, çитменнине, уйрăлассăм та килмест. Мĕншĕн тесен ĕмĕтĕм вилсенех чуп-чĕрем пушанса юлать.

Пурнах ман шухăш йăвинче, ĕмĕтĕм. Кăмăла çырлахтарнă чух. Ерипен хăвах сирĕлĕн, манăçа тухăн. Халлĕхе вара кĕтрет евĕр чунăма илĕрт, хавхаланăва тĕлкĕштер.

* * *

Эс мана савма пăрахнишĕн эп хама текех пĕрре те шелеместĕп. Тепĕр хут сана хама ятарласа юраттарма та шутламастăп. Ытла та лайăх эпĕ ăнланатăп: пĕр татăлса ўкнĕ çулçа тепĕр хут турат çине ниепле те çыпăçтарса хураймăн, пĕр çумăр пĕлĕтĕнчен уйрăлса çĕр çине ўкнĕ çут тумлама çĕнĕрен пĕлĕт ăшне чиксе лартаймăн. Сар хĕвеле çĕр тавра çавăрттараймăн...

Телее, пурнăç кĕтменлĕхпе пуян. Пĕлме çук, мĕн кĕтет сана ыран, тепĕр виç кунтан,

çулталăкран... Пĕлме çук, тен, хăв сисмесĕрех эс мана çĕнĕрен, малтанхинчен те вăйлăрах савма тытăнăн. Ыттисемпе танлаштарăн та мана, курăн: манран лайăхраххи, чипертерех-хи, маттуртараххи çук никам та. Эпĕ санăн пĕртен-пĕр телейӳ. Ăнланăн эс, ăнланăн: ман пек никам та савайманнине сана. Кашни çур-кунне турат пачах çĕнĕ çулçă çуратать, çĕнĕ çумăр пĕлĕчĕ çĕр çине çĕнĕ тумла тăкать...

* * *

Пĕр мана çеç каланă чĕрӳнтен тухакан юрату сăмахĕсене епле эс пултартăн калама теприне? Мĕнле чĕлхӳ сан çаврăнчĕ? Мĕнле? Каçхи шăплăхра кунсерен пĕр мана çеç кала-ттăн эс вĕсене. Пĕр мана валли эс чĕрӳн чи вăрттăн кĕтесĕнче упраттăн. Ăçтан тупаттăн-ччĕ-ши эс чи илĕртӳллисене, ăссăрлатаканни-сене? Пĕр ман валли пин-пин сăмах хушшин-че эс тупаяттăн чи çепĕççисене те чи хумхан-тараканнисене. Вĕсем пĕр манăнччĕ! Пĕр ман валли çеçчĕ!

Нихăçан та, ниçта та, никам та вĕсене çак пурнăçра санран илтес çуккине эсĕ мар-и ма-на ĕнентереттĕн? Ялтăр çиçĕмлĕччĕ, çут çăл-тăрлăччĕ сăмахусем...

Вĕсене пурнăçăма упранăн сыхлаттăм эпĕ. Ирхи шуçăма, сар хĕвеле, ырă куна кĕтнĕ пек кĕтеттĕмччĕ вĕсене санран. Мĕн чухлĕ ачаш-лăхчĕ сан юрату сăмахĕсенче.

Халь çав сăмахсене, пĕр мана каланă сă-махсене, эс калатăн теприне. Епле, епле хăя-тăн эсĕ? Çав териех саватăн пулсан теприне, шыраса туп ун валли пачах урăх сăмахсене...

* * *

Сӑмахсен хакӗ те вӑхӑт иртнӗҫем улшӑнать. Сана юратнӑ чухне, эс калакан кашни сӑмах маншӑн асамлӑччӗ. Вӗсене эпӗ чӑтӑмсӑррӑн кӗтеттӗмччӗ. Ытларах чунӑма чи ҫепӗҫҫисем, чи ачашшисем илӗртетчӗҫ. Ман ялан санран эпӗ саншӑн чи хитри, чи маттурри, чи кӑмӑлли иккенне илтес килетчӗ. Манӑн пӗр саншӑн ҫеҫ Турӑ вырӑнӗнче пулас килетчӗ. Урӑх пӗр хӗре те хамран ытларах сана юраттарас килместчӗ. Мӗн тери телейлӗ пулнӑ эпӗ ҫав самантсенче. Халь вара юрату тӗтӗм евӗр сӗвӗрӗлнӗ хыҫҫӑн, чуна тыткӑнлакан асамлӑ туйӑм вӑйсӑрланнӑ хыҫҫӑн, эс калакан сӑмахсен пӗлтерӗшне те пачах урӑхла ӑнланатӑп. Вӗсен хакӗ те йӳнелчӗ. Эсӗ пуринчен те илемлӗ тенӗ сӑмахусем маншӑн халь пушӑ сӑмахсем.

* * *

Пин те пин ҫут сывлӑм пӗрчи ялтӑртатать тетӗн-и ешӗл курӑк ҫиийӗн ирсерен улӑхра?

Ҫук, ҫук, ку ман тасаран та таса куҫҫулӗм ҫиҫет курӑк ҫиийӗнче.

Ҫӗрӗпе сана кӗтсе тунсӑхланипе куҫӑмсенчен ал тупанӗ ҫине шӑрҫаланса юхакан куҫҫулӗмсене ниҫта хума пӗлменрен ир-ирех улӑхра сапаласа тухрӑм эпӗ...

Пин те пин ҫут ҫӑлтӑр ҫиҫет тетӗн-и каҫсерен сӗм тӳпере?

Ҫук, ҫук, ку ман сӑваплӑран та сӑваплӑ куҫҫулӗм ҫиҫет ҫӳл тӳпере каҫсерен.

Кунӗпе сана таҫта та шыраса та тупайманран, ал тупанӗ ҫине тумланӑ куҫҫульсене

ниçта тăкма пĕлменрен çӳл тӳпене ывăтрăм эпĕ...

* * *

Шутла эп шелсĕр, пĕр чунсăр хĕр тесе, шутла. Сан умăнта эп эс курмалла теприне ятарласа ыталатăп. Эсĕ сисмелле, илтмелле пĕр ăна çеç савнине хыттăн калатăп. Хама улталатăп пулсан та, чунăма хытарса çепĕç сăмахсем пĕр теприне çеç калатăп. Çине-çинех вăл чи хаклă çын иккенне, чи маттур, чи кăмăллă арçын иккенне эсĕ илтмелле теприне калатăп.

Кашни сăмахăм çĕмрен пек, сăнă пек чĕрӳне пырса тăрăнтăр.

Кашни хусканăвăм çĕçĕ пек, хĕскĕч пек чĕрӳне пайăн-пайăн кастăр.

Эпĕ халь сан умăнта çавнашкал хăтланнишĕн, курнăçланнишĕн эпĕ мар, пĕр эсĕ хăв айăплă.

Эпĕ пĕр сана çеç савасшăнччĕ, пĕр санăн çеç пуласшăнччĕ, пĕр саншăн çеç хыпса çунасшăнччĕ. Çак самантра сан умăнта çакнашкал вылянишĕн пĕр хăвна вăрç.

Эпĕ те чунлă. Манăн та чун ыратма пĕлет: касса, чĕпĕтсе, йынăшса. Сан умăнта эпĕ теприне сана таврăс тесе, сан чунна ыраттарас тесе ятарласа ыталатăп. Ăна, пĕр ăна чи асамлă та чи хитре сăмахсем калатăп.

Илтетни? Эсĕ ху, ху çеç айăплă. Эсĕ хăв та ман умра эпĕ саншăн вилнĕ, çуннă самантра, ĕмĕрĕме сана парнелеме ĕмĕтленнĕ вăхăтра теприне ыталарăн, теприне ачашшăн чуптурăн. Ман ун чухне çĕр тĕпне анса каяссăм килнĕччĕ, ялтăр çиçĕме хама çурмалла çур-

тарасшăнччĕ, пĕтĕм тĕнчене аçа-çиçĕм çаптарса, çил-тăвăлпа тустарса кисретесшĕнччĕ.

Эс теприне ыталанă вăхăтра ман çăлтăр пулса тӳперен çĕр çине ӳксе яланлăхах сӳнес килнĕччĕ, сарă çулçăн çĕр питне витсе вилес килнĕччĕ, сывлăм пĕрчийĕн сар хĕвелĕн хĕрӳллĕ ытамĕнче куçăмсене ĕмĕрлĕхех хупас килнĕччĕ, шăпчăк кĕввин тĕпсĕр уçлăхра шăпланассăм килнĕччĕ.

Çавăнпа та ан шутла эпĕ чунсăр хĕр тесе...

Халĕ эсĕ, эпĕ теприн ытамĕнче чухне, эпĕ мĕн туйнине туй, асаплан, хурлан. Асапăн йӳçек тутине ас тивсе курнă хыççăн тин юрату, чăн-чăн юрату мĕн иккенне ăнкарса илĕн.

Çавăнпа та ан шутла эпĕ чунсăр хĕр тесе...

* * *

Ĕмĕт кайăкĕ хыççăн ыткăнтăм, ыткăнтăм.
Ĕмĕт кайăкĕ патне туртăнтăм, туртăнтăм.
Ĕмĕт кайăкне тытма тăрăшрăм, тăрăшрăм.
Ĕмĕт кайăкĕ вут-кайăкăн туйăнчĕ.
Асамат кĕперĕн умăмра çиçрĕ.
Ĕмĕт кайăкĕ асамлăн курăнчĕ,
Юррипе чунăма илĕртрĕ.
Ĕмĕт кайăкне вĕçсе çитрĕм те,
Ĕмĕт кайăкне алла тытрăм та,
Эп шутланă пек пач пулмарĕ.
Алла лексенех вăл улшăнчĕ.
Тĕсне çухатрĕ, имшерленчĕ.
Тыткăнра часах куçне хупрĕ.
Ĕмĕт кайăкне тытма ан васкăр.
Ĕмĕт кайăкне ирĕкре хăварăр!



***Ирĕклĕ,***
***ирĕклĕ,***
***ирĕклĕ çил***
***пулассăм килет...***

* * *

Ирĕклĕ, ирĕклĕ, ирĕклĕ çил пулассăм килет... Ирĕклĕ, ирĕклĕ, ирĕклĕ çилĕн вĕçессĕм килет савнă тăван енĕм çийĕн... Уйсем, вăрмансем çийĕн, çынсем, çуртсем çийĕн, пĕлĕтсем хушшипе çăмăллăн, ярăнса, ухăнса, шăхăрса...

Вăрмансем çийĕн вĕçнĕ чух хурăнсен кăтра çилхисене, юмансен çавра тăррисене, хырсен, пилешсен, ăвăссен тураттисене тустарас килет... Тĕслĕ çулçăсен асамат кĕперне карассăм килет... Çулçăсен илемлĕ кавирĕпе Чăваш енĕме сарас килет... Тăван енĕме чунтан юратни çинчен пĕтĕм тĕнчене пĕлтерессĕм килет...

Ирĕклĕ, ирĕклĕ, ирĕклĕ çилĕн юррине хăпартланса, мăнаçланса, кăмăл туличчен юрлассăм килет...

* * *

Кунăмсем-кайăксем шав вĕçеç каялла...
Кунăмсем-кайăксем ăнтăлаç каялла...
Кунăмсем-кайăксем çунаттисем çине çамрăклăха лартса илсе каяççĕ аякка-аякка...
Кунăмсем-кайăксем, чарăнсамăр, шур турат çине ларса кулянсамăр: пурнăç иртетçке, пурнăç иртет...

* * *

Килĕн-ха ман пата эс, килĕн, ах, килĕн, мĕн пур ĕçӳ çинчен манса ман пата эс килĕн, чĕрем сисет.

Калăн-ха калас сăмахна эс, калăн, ах, калăн, чуну çинче капланса ларнă пĕвӳне çурса юхĕç сăмахусем, чунăм сисет.

Чĕнĕн-ха эс мана, ах, чĕнĕн, юнашар ларт-са ыталăн, куçăмран тинкерсе йăл кулăн.

Эп çак тĕнчене пĕр саншăн килнĕ. Çак чăнлăха эс çавах ăнланса илĕн.

* * *

Юрату мĕн тери иксĕлми вăйлă пулсан та, икĕ чун пĕр-пĕрне шанма пăрахсан вилет.

* * *

— Шап-шурă юр ирĕлсен, мĕн курнать?
— Хуп-хура тăпра курнать.
— Юрату иртсе кайсан, мĕн юлать?
— Пуш-пушă чун юлать.

* * *

*Сарри Мишши журналиста, çыравçа*

Ту тăррине, ай, хăпартăм та, çил юррине эп итлерĕм. Тĕнче тăрăх ирĕклĕн вĕçни çинчен пĕлтерчĕ вăл мана. Ай, çил пулассăм килчĕ, пĕлĕт, пĕлĕт хушшипе çунаттăмсене сарса ярăнса вĕçессĕм килчĕ.

Тинĕс хĕрне, ай, пытăм та, шыв юррине эп итлерĕм. Хумăн-хумăн пĕр çырантан теп-рине хавассăн чупни çинчен вăл пĕлтерчĕ. Ай, тинĕс пулассăм килчĕ. Пĕр çырантан теп-рине мăнаçлăн саркаланса выртассăм килчĕ.

Хурăн çумне, ай, таянтăм та, хурăн юрри-не эп итлерĕм. Тăван килĕм умĕнче шухăша путса ларни çинчен пĕлтерчĕ вăл мана. Ах, хурăн пулассăм килчĕ, тăван килĕм умĕнче пурнăç çинчен шутласа ларассăм килчĕ...

* * *

Мана пурнăçунта тĕл пуличчен миçе хĕре «сана саватăп» тенĕ-ши эсĕ? Халь, ак, мана саватăп тетĕн. Мансăр пĕр чĕптĕм самант та пурăнма пултарайманни çинчен пĕр вĕçĕм сăмахлатăн. Ĕненмелле-ши сана? Каярахпа, мана савма пăрахсан, тата миçе хĕре эс «сана саватăп» тейĕн-ши?..

* * *

*Галина Романовна Евлампьева техредактора*

Çын килет çак тĕнчене асаппа ыратăва тӳссе, мĕнпур вăйне пухса шари! кăшкăрса тăр-пĕччен...

Çын ӳсет, мăшăр çунат хушать, юратать, мăшăрланать, ача-пăча ӳстерет, мĕн туйнине пĕлет пĕр-пĕччен...

Çын йывăрлăха, чун ыратăвне тӳссе ирттерет çынсем хушшинче тăр-пĕччен...

Çын, вилĕм килсен, тăрса юлать вилĕмпе куçа-куçăн пурнăçланайман ĕмĕчĕсемпе, шухăшĕсемпе никама каламан шанчăкĕпе пĕр-пĕччен...

Çын çак çут тĕнчерен уйрăлса каять ĕмĕрлĕхе юнашар пин-пин çын пулсан та, тăр-пĕччен...

* * *

*Николай Коновалов журналиста*

Чунăм — пĕр пĕчĕкçĕ йăлтăркка ахах-мерчеппе илемлетнĕ кĕмĕл арча. Тусăмсем-тантăшсем шанса калакан таса вăрттăнлăхсене асăрханса пĕр-пĕрин çумне майлаштарса ху-

ратăп. Тусăмсем сахал мар манăн. Вăрттăнлăхсем те çавна май самаях чылай. Тĕлĕнмелле! Пĕчĕкçĕ кĕмĕл арчам шуçăм евĕрлĕ çап-çутă вăрттăнлăхсене хунăçем сарăлса, тарăнланса, пысăкланса пырать. Кашни вăрттăнлăха чунăма-арчама асăрханса пуçтарса хунă хыççăн кĕмĕл çăра уççипе арчама питĕрсе хуратăп. Никам та ăнсăртран уçса ан курайтăр, никам та ан пĕлтĕр тусăмсен вăрттăнлăхĕсене. Вăрттăнлăх вăл асамлăх. Вăрттăнлăх пурнăçа илемлетет, çăмăллатать. Тавах сире, тусăмсем-тантăшăмсем, вăрттăнлăхăрсене шанса панăшăн.

* * *

Юратма пĕлмен çынсене ăмсанатăп. Мĕн тери телейлĕ вĕсем! Уяр кун евĕр вĕсен чĕрисем. Тăп-тăрă шыв евĕр вĕсен чунĕсем. Нихçан та юрату асапĕпе тулмаççĕ вĕсен чĕрисем. Хăй çулĕ çинче веçех тустаран тăвăллă юрату хĕмĕпе çунмаççĕ вĕсен чунĕсем. Мĕн чухлĕ лăпкăлăх вĕсен сăнĕнче. Мăн ту пек туяççĕ вĕсем хăйсене кĕрлекен юрату çилĕ умĕнче. Пурнăç тинĕсĕнче вĕсем лăпкăн ишеççĕ. Тунсăха чунĕçенче хуçалантармаççĕ. Канлĕн, пĕр хумханусăр пурăнса ирттереççĕ вĕсем кунçулне. Ывăнтăм юратса... Юратма пĕлмен çынсене ăмсанатăп...

* * *

Эс кайсан, çунатăмсем текех кирлĕ пулмĕç тесе эп куляннăччĕ.

Эс пăрахсан, сенкер тӳпене текех вĕçеймесрен эп хăраннăччĕ.

Эс сутсан, пурнăçăм пĕтрĕ тесе пуçа усначчĕ.

Çук иккен. Эпĕ вăйлă иккен. Хам вăйлине эс кайсан çеç эп туйрăм.

Çук иккен. Эп хăватлă иккен. Хăватлине эс пăрахсан çеç чухларăм.

Çук иккен. Эп мăнаçлă иккен. Мăнаçлине эс сутсан çеç ăнкартăм.

Эп çак тĕнчене кулянма килмен.

Эп çак тĕнчене хăрама килмен.

Эп çак тĕнчене пуç усма килмен.

Çак тĕнчене эп килнĕ юрлама — хăпартланса, пуçа ухса, мăнаçланса.

Эп килнĕ юрату çинчен юрлама — юррăмпа тĕнчене савăнтарма...

* * *

Эс мана юратманнишĕн хама шеллерĕм, шеллерĕм те — шеллев чечекĕ çавах шăтмарĕ...

Эс мана юратманнишĕн хама шеллеме пăрахрăм та, ай, турах, телей чечекĕ шăтрĕ тухрĕ...

* * *

Санпа пĕрле телей шерпетне пĕр алтăр куркаран ĕçсе курнă хыççăн, кула, кула, кула кăмăлтан савăнса, питсем, алăсем, пўрнесем тăрăх çут тумласене юхтарнă хыççăн, телей шерпечĕ мĕн тери пылаккине пĕр санпа çеç ас тивсе пĕлнĕ хыççăн, çĕнĕрен ăна пĕр арçынпа та тутанса пăхассăм килмест.

Тепринпе телей шерпечĕ тўрех йўçек тутăллă пуласран эпĕ питĕ-питĕ хăратăп...

* * *

Тӗнчене ыталамалӑх туйӑмӑм пур, анчах ман туйӑмӑм сана кирлӗ мар. Тӗнчене тӗлӗнтермелӗх хӑватӑм пур, анчах ман хӑватӑм сана кирлӗ мар. Тӗнчене кисретмелӗх вӑйӑм пур, анчах ман вӑйӑм сана кирлӗ мар.

Сана кирлӗ мар та, урӑх никама та кирлӗ мар тесе пуҫӑма усрӑм. Пуҫӑма усрӑм та, куҫӑма хупрӑм. Куҫӑма хупрӑм та, шухӑша путрӑм. Шухӑша путрӑм та, пӗлӗт пултӑм. Тӗнчене ыталамалӑх туйӑмӑм пуррине, тӗнчене тӗлӗнтермелӗх хӑватӑм пуррине, тӗнчене кисретмелӗх вӑйӑм пуррине туйса илтӗм. Туйса илтӗм те, аҫа ҫаптартӑм, ҫумӑр ҫутартӑм, ҫӗрӗме шӑвартӑм.

* * *

Тытсам, тӑванӑм, аллӑма, тытсам, манран ан хӑрасам. Эп килтӗм сан пата ырӑпа, эп килтӗм сан пата кӑмӑлпа. Чул татки ҫук аллӑмра, ҫивчӗ ҫӗҫӗ ҫук аллӑмра, наркӑмӑш ҫук аллӑмра. Тытсам, тӑванӑм, аллӑма, тытсам, ҫирӗппӗн чӑмӑртасам. Чӗрем ӑшшине илсем туйса, чунӑм пуяннине илсем ӑнланса. Эп килтӗм сан пата ырӑпа, эп килтӗм сан пата кӑмӑлпа.

* * *

Ҫав та ҫав кун сар хӗвел ҫутатма пӑрахать маншӑн, хӑҫан та хӑҫан эс мана ӑш сӑмахсем калама пӑрахатӑн.

Ҫав та ҫав кун сар кун илемӗ тӗссӗрленсе

ларать маншăн, хăçан та хăçан эс мана асăрхама пăрахатăн.

Çав та çав кун çут тĕнче пĕтсе ларать маншăн, хăçан та хăçан эс мана юратма пăрахатăн.

* * *

Телейĕм, сан алтăр куркунтан вилĕмсĕрлĕх симпылне ĕçессĕм килет.

* * *

Эсĕ манăн мар, теприн. Манăн вара нихăçан та пулас çук. Çавах эпĕ сан сăнарна яланах хам асăмра асăрханса упратăп. Эсĕ манăн мар пулсан та, сан сăнарна хамра усранипе, темшĕн-çке эсĕ пĕр манăн çеç пек туйăнатăн.

* * *

Эпĕ телейлĕ пулма çуралнă. Пĕлĕр пурте: эпĕ телей курма çуралнă!

Шăл çĕмĕрсе кĕрсе те пулсан, пурпĕрех хам телейĕме çĕнсе илĕп. Çитет, çитет телей çинчен ĕмĕтленсе çеç пурăннипе. Кирлех пулсан, илĕп аллăма хĕç, хурăп ăна пурнăç сунталĕ çине, туптăп, туптăп хĕртсе вучахра.

Шап-шурă уй варрине шелсĕр шăпампа тухăп кĕрешме. Мĕнпур вăйăма пухса сулса ярăп хĕçĕме, çурмалла касса татăп хирĕç тăран усал-тĕселе. Телейĕмпе алла-аллăн тытăнса тухăп çапăçу хирĕнчен.

* * *

Кашла, кашла, вăрман, сĕм вăрман. Авăна-авăна кашла. Хумханса-хумханса кашла. Кĕрлесе-кĕрлесе кашла. Эп ӳлесе йĕнине ни-

кам та ан илттĕр. Савнишĕн тунсăхланă чунăмран сассăм еплерех кăкăрăмран чĕтренсе тухнине никам та ан туйтăр. Шутлаччăр пурте сĕм вăрман кашлать тесе, çамрăк хĕр мар, шухă çил ачи ӳлесе йĕрет тесе, пуçне çĕр çумне тая-тая вăрман кашлать тесе.

Çу, çу, çумăр. Çапса çу. Вăйлăн-вăйлăн çу, витререн тăкнă евĕр çу. Ăмăр пĕлĕтсем, каплланса килсе хупласа илĕр çĕр-аннене. Сиксе-сиксе çу, çумăр. Шултра тумламусемпе пĕтĕм таврана йĕпетсе çу, çумăрăм! Тумламусем чашлатса ӳкчĕр ешĕл çулçăсем çине, вулăсемпе туратсем çине, манăн пит çине. Çумăр тумламĕсем пĕрлешчĕр ман йӳçĕ куççуль тумламĕсемпе, юхчăр пит тăрăх пĕрле йĕр йĕрлесе. Эп епле савнишĕн тунсăхласа çут куççуль юхтарнине ан куртăр никам та. Ман чунăм епле хурланнине ан систĕр пĕр çын та. Шутлаччăр пурте сар хĕрĕн пичĕ çумăрпа йĕпеннĕ тесе. Еплерех çумăр вăйлăн çапса çăвать тесе.

Вĕр, вĕр, çил, шăхăрса вĕр, шухă çил! Йăрăс пилĕклĕ шур хурăнсене ытала-ытала вĕр. Ешĕл çулçăсене суллантарса вĕр. Çулçăсемпе пĕрле ман пуçăма та суллантар, пĕвĕме çĕр патнелле тайтар. Хура çӳçĕме тăрмала, пит тăрăх сапала. Ан куртăр никам та чуна ыраттаракан тунсăхпа куçăмсем тулса ларнине, унта куççуль çут сывлăм пĕрчийĕн йăлтăртатнине. Ман хурлăхлă сассăма инçе-инçе вĕçтер, шур пĕлĕтсем çине лартса аякка-яакка илсе кай.

Шутлаччăр сынсем: ахăрса вĕрекен çил хĕр пуçне пĕкнĕ, пĕкнĕ тесе. Ах, еплерех паян çил тавралăха тустарать тесе...

* * *

Сана курас килнипе мĕнлерех хыпса ҫуннине эп хам анчах пĕлетĕп, эс пĕлместĕн.

Сансăр тунсăхласа ҫĕрĕпе куҫ хупмасăр йĕнине эп хам анчах пĕлетĕп, эс пĕлместĕн.

Санпа сăмахласа канăҫсăрланакан чуна ҫăмăллатас килнине эп хам анчах пĕлетĕп, эс пĕлместĕн.

Иксĕмĕр пĕр-пĕрне сăмахсăрах ăнланса шăкăл-шăкăл калаҫса ĕмĕре пĕрле ирттерес килнине эп хам анчах пĕлетĕп, эс пĕлместĕн, пĕлесшĕн те пулмарăн...

* * *

Санăн икĕ куҫу — икĕ ҫап-ҫутă инҫет ҫăлтăрсем. Ҫинҫен-ҫинҫен йăлтăртатса ҫуталакан ҫăлтăр ҫулĕпе сан пата пĕр чарăнми вĕҫес килет манăн.

* * *

Сан валли ман яланах ҫӳл тӳпери чи ҫап-ҫутă ҫăлтăр пулаясчĕ. Сана ҫул кăтартакан ҫăлтăр. Эсĕ ҫулҫӳреве тухсан, ҫухалса каясран, аташасран тӳрĕ ҫул кăтартакан ҫăлтăр. Вĕҫĕ-хĕррисĕр пурнăҫ тинĕсĕнче киммӳне ишнĕ чухне аташса каясран, ҫыран ăҫтине пĕлмесен, тӳпенелле тинкерĕн те, ҫап-ҫут ҫăлтăра — мана — курăн. Ҫăлтăр ҫути кăтартĕ сана ҫитес ҫулна. Киммӳне килсе ҫапакан пурнăҫ хумĕсенчен хăрамасăр ишсе ҫитме пулăшăп сана сĕвек ҫыран патне...

Вĕҫĕ-хĕррисĕр хуп-хура ҫăра вăрманпа сĕм ҫĕрле утнă чух ăнсăртран ҫухалса кайсан,

ан хăра, тӳпенелле пуçна çĕклесе тинкер. Пĕрпĕрне хăваласа чупакан тĕксĕм пĕлĕтсем хушшинчен курăна-курăна чĕнĕп сана. Сан валли çап-çуттăн ялтăрăп. Çăлтăр çинчен куç илмесĕр утса çитес çĕре çитĕн эсĕ.

...Ĕмĕр-ĕмĕр сан пурнăçănти чи çап-çутă çăлтăр пулаясчĕ манăн.

* * *

Сана тĕл пулсан, сан куçусенче эп юрату текех курмастăп. Савăнăçпа тулмаççĕ çут кӳлĕ евĕр кăн-кăвакскерсем. Хĕрӳ хĕлхем те текех ташламасть вĕсенче вĕлтĕр-вĕлтĕр.

Сан куçусем сӳннĕ çăлтăрсем пекех — сĕмтĕттĕм. Кĕрхи суха хыççăнхи уй евĕр — пушпушă. Вĕсенче урăх юрату пурăнмасть.

Нимĕн те тăваймăн. Çын чĕринче çут туйăм пурăнаймасть пĕр вĕçĕм. Çын чĕрине вăл килет хăналăх. Чи чаплă, чăтăмсăррăн кĕтнĕ хăна та самайрахран ывăнтарса, йăлăхтарса çитерет. Темле хаклă пулсан та вăл саншăн, унран та канас килет. Хăна çакна часах сисет те, ыррăн-сыввăн сывпуллашса хăй çулĕпе тухса утать.

Юрату та çавах-ши? Хăй урăх кирлĕ маррине туйсан, çынрап уйрăлса каять-ши?

* * *

Куçăмран юхакан кашни çутă куççуль тумламĕ сăваплă. Кашнине чун ыратăвĕ çуратнă.

Эсĕ ман куççулĕн пĕр пĕчĕк тумламне те тивĕçлĕ мар, йывăрлăхра сутнăшăн.

* * *

Юрату суккăр, теççĕ. Тен, чăтма çук лайăх пуль вăл юрату суккăрри.

Юрату куçлă пулнă пулсан, çак тĕнчере вăл пачах пурăнаймастчĕ...

* * *

Кашни сăмахунта — курайманлăх. Кашни хусканăвунта — курайманлăх. Туту хĕрринче — курайманлăх. Çĕмĕрт куçунта — курайманлăх. Питӳнте, пӳрнӳсенче, хулпуççисем çинче, аллусенче — курайманлăх.

Курайманлăхпа тулнă сăмахусемпе-çупкусемпе шелсĕр çутăлтаратăн мана, сăмахусемпе-çупкусемпе пĕр чарăнми хĕрхенмесĕр çупатăн, çупатăн чуна.

Тăратăп умăнта пĕр хускалми. Куçна тинкерме вăтанса. Эс калакан сăмахсене итленĕçем пĕкетĕп пуçа. Хăранипе мар, саншăн имённипе. Сана никам та ман таса чуна варалаcа таптама ирĕк паман.

Сана никам та ман çут сывлăмлă туйăмсенчен кулма ирĕк паман.

Сана никам та мана йĕрĕнсе тинкерме ирĕк паман.

Эпĕ сана вилсе каймалла савни сана мана курайманлăхпа чунăма çутăлтарма ирĕк памасть...

* * *

Туйăмсен тăвалĕ кăкăра çурса тухасла чунăмра кĕрлет, çавăрттарать. Канлĕн пурăнма чăрмантарать. Миçемĕш хут эп тухса утатăп сан патна? Сана калам татăклăн юлашки сăмахăма: манар пĕр-пĕрне, уйрăлар ĕмĕрлĕхе.

Çитет пĕр-пĕрне асаплантарса, чунăмăрсене ыраттарса.

Кăмăла хытарса çитетĕп сан пата. Ним пулман пек тинкерсе пăхатăп та куçна, пуçтатăп тарăн авăра. Калас сăмахăмсем çĕтеççĕ самантрах, тухаççĕ манăçа. Яланхилле çитерейместĕп хал, тăлланать чĕлхем. Туйăмсен тăвăлĕ тӳрех лăпланать, шăпланать, çухалать. Пĕр сăмах чĕнмесĕр тухса утатăп урама.

Вăхăт иртнĕçем çĕнĕрен пуçланать асаплану, шухăшсем пыраççĕ капланса, пĕр-пĕринпе пĕрлешсе пуçлаççĕ кĕрлеме. Çилленетĕп хама, пĕлетĕп-çке, пĕлетĕп нихçан санпа пĕрле пулас çуккине. Пĕлетĕп хăвăртрах санпа уйрăлса çĕнĕ пурнăç пуçламаллине.

Пĕлетĕп! Анчах эпĕ тепĕр япалана та пĕлетĕп: манăн сансăр çĕнĕ пурнăç пуçлас килменнине...

* * *

...Кĕт мана, эпĕ сан пата кивĕ çулпа çĕнĕ çул тĕл пулнă кун, сĕм каç хăйĕн çут çăлтăрлă чаршавне карса çут тĕнчене тутлă ыйха путарсан, шăп та лăп çур çĕр варринче çитĕп. Кĕт мана...

Чӳрече янаххи çине çурта çутса ларт. Инçет çулра аташса каясран, шап-шур юланутăм такăнасран такăр сукмак евĕр çуталса вырттăр, чĕнтĕр мана çурта çутти. Аякранах çут шанчăкпа тулнă чĕрем, эсĕ мана чăтăмсăррăн кĕтсе тăнине пĕлекен чĕрем, чечеклентĕр, ăшă туйăмпа тултăр. Çӳл тӳпере сапаланса тухнă çут чечексенчен-çăлтăрсенчен пухнă çыхха парнеллĕп сана. Шăп та лăп çур çĕр варринче, кĕтретсем пулса иртнĕ самантра пирĕн пурнă-

çăмăрта чи асамлă каç пулĕ—юрату каçĕ. Иксĕмĕр шур акăш пулса çӳл тӳпенелле вĕçсе хăпарăпăр, çап-çут çăлтăрсемлĕ хур-кайăк çулĕпе кăмăлсене йӳле ярса пĕр-пĕринпе вылянса вĕçĕпĕр, çăлтăрсен шур сĕтлĕ кӳллинче чӳхенсе ишĕпĕр, унтан тасалса тухса икĕ çапçутă çăлтăр пулăпăр, çын ури пусман, çын куçĕ курман çĕре çитĕпĕр, çылăхлă çĕр çине икĕ çап-çут сывлăмлă чунлă пулса таврăнăпăр.

Шăп та лăп çур çĕр варринче эсĕ ман ăшра, эпĕ сан ăшунта пĕр-пĕрне туйса тăрса ирĕлĕпĕр, пĕр пĕчĕкçĕ çут чăмакка пулса тăрăпăр.

Шăп та лăп çур çĕр варринче — пĕр чĕптĕм самант хушшинче, вăхăт ĕмĕрлĕхпе танлашнă чухне — эсĕ тата эпĕ пĕр уйрăлми ăнлав пулăпăр.

Кĕт мана, ыйтатăп, кĕт. Ниме пăхмасăр, ниме уямасăр çитĕп сан пата. Нимĕн те, никам та чараймĕ мана çур çĕр варринче сан пата шап-шур юланутпа çилтен хăвăртрах вĕçтерсе çитме.

Шăп та лăп çур çĕр варринче эсĕ тата эпĕ пĕр çулăмлă шухăш пулса таврана хĕмлентерсе ялкăшса çунăпăр, пĕтĕм çут тĕнче уçлăхне хамăрăн юратупа çутатăпăр. Çут тĕнче эсĕ тата эпĕ пулса тăнă пĕр сăмах-ăнлав, пĕр сăмахкĕлĕ ăшне кĕрсе вырнаçĕ. Эсĕ тата эпĕ сăмахсем пĕр самант хушшинче тĕнче уçлăхĕ те, вăхăт та, çутă та, çулăм та, шухăш та пулса тăрĕç.

Пĕтĕмпех, пĕтĕмпех, çак аслă та вĕçĕ-хĕррисĕр тĕпсĕр çут тĕнчери мĕн-пур япала — пурнăç, вилĕм, ӳсĕм, çухату, чĕрĕлӳ, çуралу — эсĕ тата эпĕ пулса тăнă пĕр пĕчĕкçĕ çап-çут

пăнчăран пуçланать, пăнча кĕрсе унпа пĕр пулать.

Кĕт мана, эпĕ сана шăп та лăп çур çĕр варринче юратăвăн пылак симпылне ĕçсе ӳсĕртĕп, юратăвăн шап-шур чечеклĕ сад пахчине илсе кайăп. Унта иксĕмĕр тĕлĕнмелле шăплăхпа киленĕпĕр.

Кĕт мана, çав пахчара эпĕ сана телейĕн вилĕмсĕр кайăксен асамлă юррине итлеттерĕп. Хальччен вĕсен киленӳллĕ юррине пĕр çын та итлесе курман, уру айĕнчи çылăхлă çĕре туйми пулăн, вăхăт мĕнне манăн, юрра итленĕçем хăв та вăхăт пулса тăрăн, вăхăт пулсан — ĕмĕрлĕхĕн çутă та çепĕç юрри пулса тĕнче уçлăхĕнче янăрăн, сар уйăхпа сар хĕвел, çут çăлтăрсем санăн, санăн кăн-кăвак тӳпеллĕ, çут сывлăмлă кĕввӳне итлесе савăнĕç, пĕр сана ăнланĕç.

Кĕт мана...

Кивĕ çулпа çĕнĕ çул тĕл пулнă кун çур çĕр çитес умĕн сан сăмахусене ĕненсе, сана кĕтсе илес тесе, çурта çутса алла тытрăм та, кантăк умне пырса тăтăм. Инçе-инçе, çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ тĕлех ӳкрĕ çурта çутти, çапçут сукмак пулса тăчĕ. Çутă ӳкнĕ çĕрте шапшур юр пĕрчисем ахаххăн-мерченнĕн çиçрĕç. Эсĕ аташса каясран, килĕм тĕлне хăвăртрах çиттĕр тесе аллăмри çуртана çӳллĕ çĕклерĕм. Эс килес çула çап-çут хĕлхем ташла-ташла, авкалана-авкалана çутатрĕ. Хĕмленсе çунакан çурта ман тунсăха ăнланса манпа пĕрле сана чăтăмсăррăн кĕтрĕ.

Çут тĕнче çинчен манса, сукмак çинчен куç илмесĕр тинкертĕм эп инçетлĕхе. Сĕм-сĕм тĕттĕмлĕхрен çутта тухса çут сукмакпа пĕр ман пата çеç çитессе, типсе куштăркана çĕр çумăр

килсе шăварасса кĕтнĕн, вилме пуçланă çын юлашки сывлăш çаврăмне тарăннăн сывласа илсе тата та кăштах та пулсан пурнăçне тăсма хăтланнăн кĕтрĕм пĕр сана. Юратупа тулнă чĕрем хĕл кунĕнче асамлă шап-шур чечексем çурчĕ. Никам, пихçан курман чĕремĕн чечек сыххине санăн ална тыттарасшăнччĕ эпĕ.

Чунăм, пĕр пĕчĕкçĕ шап-шурă лĕпĕш пулса, савăнăçпа, киленӳпе, ăнтăлупа тулса, хумханса тапакан чĕремрен ирĕкелле вĕçсе тухса, пĕр чӳхенсе, пĕр аванса, илемлĕн-илемлĕн ташласа, пĕр хускалмасăр, мĕлтлетмесĕр çунакан çуртан çутти тавра вĕлтĕртетсе-вĕлтĕртетсе, савăнăçне пытараймасăр вĕçрĕ. Чунăм, эсĕ шантарса каланă сăмахсене ĕненнĕскер, шăп та лăп çур çĕр варринче сан чунупа пĕр пулса ĕмĕрлĕхе туйса курма, ĕмĕрлĕхпе пĕр пулма хатĕрленчĕ. Кантăк умĕнче куç сиктермесĕр çул çине тинкернĕ чухне вăхăт мĕнне мантăм, хам та вăхăт пулса тăтăм. Канăçсăрланакан чĕрем сехет евĕр кашни çеккунта хакласа ĕмĕрлĕх виçи çинче виçрĕ. Шап-шур хур кайăкĕсем пулса тăрса çеккунтсем тĕнче уçлăхнелле вĕçрĕç. Эпĕ сана кĕтнине пĕлтерме сана хирĕç ăнтăлчĕç. Çунаттисем вĕçевре ан хуçăлччăр тесе, кайăкăмсем ан ывăнччăр тесе ăшăмра пĕр чарăнми кĕл турăм.

Акă сехет йĕпписем вуниккĕ патнелле сывхарма пуçларĕç. Тепĕр самантран сехет çур çĕр çитнине пĕлтерсе пӳлĕмри шăплăха çурмалла çурса умлăн-хыçлăн вăхăта шутлама тытăнчĕ. Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă, пиллĕк— чан сасси евĕр янăрарĕ чĕремре сехет сасси. Ассăрлатакан чан сасси пӳлĕмре çеç мар, ман чĕрере, ман чунра, тĕнче уçлăхĕнче янăрарĕ. Янăрарĕ çеç мар, тавралăха кисретрĕ, чĕтрен-

терчĕ. Улттă, çиччĕ, саккăр, тăххăр, вуннă — калаçрĕ сехет манпа. Чунăмпа калаçакан сехетпе пĕрле чĕрем те сехет пулса тапрĕ, кĕтрете кĕтрĕ, асамлă юрату симпылĕпе тултарнă алтăр куркана сан аллунтан илсе санпа пĕрле симпыла ĕçсе пĕр самант хушши ĕмĕрлĕх пулма хатĕрленчĕ.

Вунпĕр, вуниккĕ!!! Вуник хут сехет çапсан, чан сасси шăпланчĕ. Пӳлĕм чăтма çук хăрушă шăплăхпа тулса ларчĕ. Ура айĕнчен çĕр таçталла шуçса кайрĕ, куçăмсене хуп-хура тĕтре карса илчĕ, тăнлавсенчи чĕре таппи час-час чарăнса ларассăн туйăнчĕ. Шăп та лăп сехет вуниккĕ çапнă хыççăн, эсĕ килмен хыççăн, пĕтĕм тĕнче ман чĕрен сассипе тулса ларчĕ. Мĕнпур тĕнчере ман чĕрен чанĕн сасси çеç хăрушшăн янăрарĕ. Чунăм, читлĕхри кайăк евĕр, сан ултавна ĕненмесĕр, çак таранччен çын илтмен сасăпа асаплăн кăшкăрса йĕрсе ячĕ. Анчах пĕр чĕр чун та илтмерĕ ман чĕремĕн чанĕн сассине. Çут çăлтăрсемпе уйăхлă каç, йăлтăр-ялтăр çиçĕмпе çиçекен юр пĕрчисем тата аллăмра чĕтренсе çунакан çурта çеç илтрĕç çав вилĕмрен те хăрушă, тискер кайăк сассинчен те вăйлă сасса.

Çап-çут тумласем пулса пĕрерĕн-пĕрерĕн ӳкрĕç ал тупанĕ çине ялтăртатса çунакан çурта тумламĕсем. Пӳрнесене пĕçертсе-пĕçертсе илчĕç. Чĕреме пайăн-пайăн çунтарса кĕллентерчĕç. Ал тупанĕ çинче çуртан çут тумламĕсем мар, ман татăлса йĕрекен чĕрен юн тумламĕсем ӳкнĕн туйăнчĕç мана. Аллăмри çурта ман чунпа пĕрле хурланса-хурланса йĕчĕ. Çут çурта тумламĕсем çут куççулĕмсемпе пĕрлешсе, пĕр пулса хытса, ман юратăвăмăн палăкĕ пулса купаланчĕç ман ал тупанĕ çине.

Анăçран васкаса килекен шурăмпуç кантăка сенкерлетсен, çуртан юлашки çут тумламĕ тепĕр хут юлашки вăйне пухса ялтăртатса илсе ĕмĕрлĕхе сӳнекен çуртан пĕчĕкçĕ хĕлхемĕпе пĕрле манăн çепĕç те илемлĕ юратăвăмăн чĕринчен юлашки юн тумламĕ сăрхăнса тухса çылăхлă çĕр çине ӳкрĕ...

* * *

...Эсĕ тин çеç манпаччĕ. Сан хыççăн алăк хупăнчĕ те, тӳрех пӳлĕмре йӳçĕ тунсăх хуçаланма пуçларĕ. Калама çук пысăк, çĕр чăмăрĕ евĕрскер, мана ыталаса илчĕ, чĕнтĕрлĕ пĕркенчĕкпе витсе ячĕ. Эс манран уйрăлсанах сансăр иртекен кашни çеккунт хура кĕркуннен чи вĕтĕ йĕпхӳллĕ те чи ăмăр пĕлĕтсемлĕ кунĕ пекех пулса тăчĕ. Чун çинче çĕр çумĕпех шăвакан йывăр тăхлан пĕлĕтсем хура тăпра çумнех пăталаса лартаççĕ ал-урана. Тин çеç шурă ăйăр евĕр малалла ĕрĕхтерсе чупакан сехет йĕпписем тимĕр шапаран та мăрантарах шума пуçларĕç. Самант-самантпа вырăнтан та хускалман пекех туйăнаççĕ вĕсем мана. Ăшăмра чуна çӳçентерекен, чĕпĕтекен тунсăх хуçаланать. Халь маншăн сар хĕвел те тĕксĕммĕн çутатать, кун çути те илемсĕр, çут çăлтăрсем те сӳннĕ, хаваслă та илемлĕ юрă та, кĕвĕ те илĕртмест чĕреме. Эс çаврăнса киличчен кун та уйăхăн тăсăлĕ, çĕр те çулталăкăн туйăнĕ...

...Тунсăх, тунсăх, йӳçĕ, канăçсăрлантаракан тунсăх йĕри-тавра. Эс ăшăтнă пӳлĕм те халь сивĕ, эс тин çеç сĕртĕннĕ япаласем те тунсăхлă. Чӳрече умĕнче ӳсекен лăпсăркка çирĕк те тунсăхлă тураттисемпе ытла та ки-

чеммӗн кантӑкран шаккать. Уҫӑ чӳречерен вӗҫсе кӗрекен ӑшӑ ҫилӗ те тунсӑхпа тулнӑ. Ҫӳҫӗме, аллӑма, ӳтӗме вӑл тунсӑхлӑн ачашлать. Пӳлӗмри сывлӑш та тунсӑхпа туслашнӑ...

Таврӑнсам хӑвӑртрах, ыталасам вӑйлӑ та ҫирӗп аллусемпе, чӑмӑртасам кӗрнеклӗ те яштак кӗлеткӳ ҫумне: чӑл-пар сирӗлтӗр, ирӗлтӗр тунсӑх. Асамлӑ кӗвӗ, юрату юрри янратӑр чунӑмра, чӗремре, тӗнчере...



# Куллу,
# сан куллу,
# манас çук
# ăна...

* * *

*Петр Романов композитора*

Куртăм сана ăнсăртран урамра,
Пăхрăн куçран, илтĕн йăл кулса.
Кайрăм утса урампа малалла,
Чăтаймасăр пăхрăм эпĕ çаврăнса.
Хусканмасăр тăтăн эс ман умра,
Йăлтăр куллупа илĕртрĕн чуна.
Куллу, сан куллу,
Илчĕ тыткăна,
Куллу, сан куллу,
Илĕртрĕ чуна.
Куллу, сан куллу,
Хумхатрĕ чуна.
Куллу, сан куллу,
Килĕшрĕ мана.
Ыран каллех эп утăп урампа,
Тĕл пуласчĕ çул çинче ман сана.
Йăл кулса илĕртсем эс мана.
Сан куллуна илсе каям хампа.
Асăмра эп усрăп сан сăнна.
Нихăçан манас çук эп сана.
Куллу, сан куллу,
Илчĕ тыткăна.
Куллу, сан куллу,
Манас çук ăна.
Куллу, сан куллу,
Кирлĕ-çке мана.
Куллу, сан куллу,
Йăл кулсам мана!
Сан куллу тĕлленчĕ тĕлĕкре,
Çут хĕвелĕн çиçрĕ тӳпере!
Чечек евĕр çурăлчĕ чунра,
Çăлтăррăн çуталчĕ умăмра!
Сан куллу халь манăн чĕрере!
Сан куллу пĕр манăн ĕмĕтре!

* * *

Каç чаршав карсассăн таврана,
Ыйхă сĕмлесессĕн хулана,
Эп васкатăп дискотекăна,
Тĕл пулас тесе унта сана.

Чĕнсем ташша эс мана,
Ташлас килет ман санпа.

Кĕвĕ-çемĕ янăрать хитре.
Йăлтăр кулă çамрăк сăн-питре.
Яштака хĕрсем сан çумăнта.
Хĕм-шевле çиçет сан куçунта.

Чĕнсем ташша эс мана,
Ташлас килет ман санпа.

Пĕр хĕрпе эс ташлан, тепринпе.
Сан çине эп пăхап ĕмĕтпе.
Ах, хăçан асăрхан эс мана,
Парнелен йăлтăран куллуна.

Чĕнсем ташша эс мана,
Ташлас килет ман санпа.

Çепĕç юрă-кĕвĕ хумĕнче,
Пĕтĕм дискотека умĕнче,
Санăн шанчăклă ытамунта
Вирхĕнесчĕ ташăра чунтан.

Чĕнсем ташша эс мана,
Ташлас килет ман санпа.

* * *

Тинĕс леш енче эс, эпĕ — ку енче!
Хура тинĕс пире уйăрать.
Сана чуптăватăп хамăн шухăшра,
Саншăн тунсăхлатăп, ялкăшса вутра.
Куç хупса илмелĕх
Ман сана курасчĕ!
Ачаш çилĕн сĕртĕнесчĕ тутуна.
Мĕн тери курас килет сана!
Сансăр питĕ тунсăх, сансăр питĕ япăх!
Чăтаймастăп урăх эпĕ уйрăлăва.
Çырана çапаççĕ кăпăшка хумсем,
Чĕрене çураççĕ çивĕч туйăмсем.
Куç хупса илмелĕх
Ман сана курасчĕ!
Шыв пĕрчийĕн сĕртĕнесчĕ тутуна.
Мĕн тери курас килет сана!
Хумсем çийĕн çăмăллăн чупасчĕ!
Хăвăртрах лекесчĕ çирĕп ытамна.
Куçран тинкересчĕ йăл кулса сана,
Сана парнелесчĕ çут юратăва!
Куç хупса илмелĕх
Ман сана курасчĕ!
Хĕвел шевлийĕн сĕртĕнесчĕ тутуна.
Мĕн тери курас килет сана!
Пĕр самант та урăх сансăр пурнаймастăп.
Тинĕс те, хĕвел те кирлĕ мар мана.
Асăмра усратăп санăн сăнарна.
Ман пуласчĕ ĕмĕр пĕр санпа кăна.
Куç хупса илмелĕх
Ман сана курасчĕ!
Куççуль тумламĕн сĕртĕнесчĕ тутуна!
Мĕн тери курас килет сана!

* * *

Эс сисес те çук,
Эс пĕлес те çук
Сан çурту умĕнчен эп иртсе пынине,
Сан çурту умĕнче чарăнса тăнине.

Чӳречери çутă асăрхарĕ мана.
Пĕччен пилеш йышăнчĕ мана.

Эс сисес те çук,
Эс пĕлес те çук
Чӳречӳ умĕнче эп ирччен тăнине,
Чĕрем саншăн хĕмленсе çуннине.

Тулли уйăх саламларĕ мана.
Пилеш çырлипе хăналарĕ мана.

Эс сисес те çук,
Эс пĕлес те çук
Мĕн тери сана курас килнине,
Йӳçĕ тунсăх чунăма çинине.

Тӳпери çăлтăрсем ăнланчĕç мана.
Пилеш сĕртĕнсе шеллерĕ мана.

Эс сисес те çук,
Эс пĕлес те çук
Йышăнман юратун йӳççине,
Пĕчченлĕхрен хăрушши çуккине.

Ирхи шуçăм ыталарĕ мана.
Пилеш сирчĕ йӳçĕ тунсăха.

* * *

Шавлă туй сиксе ташлать,
Купăсçă кĕвĕ калать.
Амăш куççульне шăлать,
Хĕрне ют çĕре парать.
Тамата сăмах калать,
Мăшăрсене саламлать.
Тулли куркана йăтать,
Тату пурăнăç сунать.

Ылтăн çĕрĕ çавракa, çавракa.
Ылтăн çĕрĕ варринче — ик чĕре.
Ылтăн çĕрĕ çавракa, çавракa.
Ылтăн çĕрĕ варринче—çĕн çемье.

Ашшĕ-амăш пил тăвать.
Çĕн çемйене йышăнать.
Юрату, телей сунать.
Хаклă парнесем парать.

Туйри халăх савăнать.
«Йӳçĕ» тесе кăшкăрать.
Каччă хĕре ыталать,
Ыталать те чуптăвать.

Ылтăн çĕрĕ çавракa, çавракa.
Ылтăн çĕрĕ варринче — ик чĕре.
Ылтăн çĕрĕ çавракa, çавракa.
Ылтăн çĕрĕ варринче—çĕн çемье.

Ылтăн çĕрĕ ялтăрать.
Ик чĕре пĕрле тапать.
Каччă хĕре юрататъ,
Хĕрĕ каччăна савать.
Ылтăн çĕрĕ ялтăрать,

Çĕр чăмăрĕн курăнать.
Сар хĕвелĕн çуталать.
Ик чĕрене ăшăтать.

Ылтăн çĕрĕ çаврака, çаврака.
Ылтăн çĕрĕ варринче — ик чĕре.
Ылтăн çĕрĕ çаврака, çаврака.
Ылтăн çĕрĕ варринче—çĕн çемье.

* * *

Шур юр çинче кăвайт çунать — сар уйăх
тӳпере!
Ман шăннă пӳрнесем санăн аллусенче!
Вĕрсе эс ăшăтатăн ачашшăн вĕсене.
Шур юр çинче хĕлхем ташлать — çут çăлтăрлă
тӳпе!

Шур юр çинчи кăвайт çути — санăн куçусенче!
Шур юр çинчи хĕлхем ташши — çиçет-çке
çиçĕмле!

Çӳл тӳперен çӳне-çӳне ӳкеççĕ çăлтăрсем.
Мана савни çинчен эс вăрттăн пĕлтерсем!
Шур юр алла илсе ывтатăп кăвайта.
Юр пĕрчисем тумла пулса çӳнеççĕ çăлтăрла.

Шур юр çинчи кăвайт çути —санăн куçусенче!
Шур юр çинчи хĕлхем ташши — çиçет-çке
çиçĕмле!

Кăвайт çути, кăвак тӳпе, çӳнеççĕ çăлтăрсем,
Пуç çаврăнать, чĕрем сикет, чĕтреççĕ алăсем.
Тутупала тутам çумне часрах эс сĕртĕнсем.
Хĕлхем ташши, кăвак куççем — асамлă-çке
тĕнче!

Шур юр çинчи кăвайт çути—кăвак куçусенче!
Шур юр çинчи хĕлхем ташши — çиçет-çке
çиçĕмле!

Шур юр çинче кăвайт çунать — тапаççĕ
чĕресем.
Ĕмĕтсене пурнăçласа ӳкеççĕ çăлтăрсем.
Юр пĕрчисен сенкерлĕхĕ — кăвак куçусенче,
Сан аллусем, хĕлхем ташши — сĕм каç
ытамĕнче!

Шур юр çинчи кăвайт çути — кăвак куçусенче!
Шур юр çинчи хĕлхем ташши — çиçет-çке
çиçĕмле!

* * *

Анăç вăтанчăк пикен хĕрелет,
Тăпăртатса лаша чупни илтĕнет.
Шур лаша çинче чипер хĕр ларать.
Сар хĕвелпе сывпуллашма васкать.

Çилхесем сапаланса вĕçеççĕ.
Çил юрлать «юрататăп» тесе.
Ман хĕре хăваласа çитесчĕ.
Хĕвеле ăсатмашкăн пĕрле.

Тĕлĕнсе, савăнса эпĕ тăтăм.
Вĕриленсе ӳтĕмре юн чупать.
Куç хĕмне çеç курса эпĕ юлтăм.
Асамлăхпа манăн чунăм тулать.

Çĕмĕрт куçлă пике, чарăнсамччĕ!
Сан сăнна тăраниччен курам.
Куçусен кӳллинче ман путасчĕ!
Çинçе пилĕкне хуллен ыталам.

Чăпар ăйăра эп утланăп
Кăйкăр евĕр хĕр хыççăн вĕçме.
Хĕрпе юнашар эпĕ тăрăп
Çăлтăрсен юррине итлеме!

Çилхесем сапаланса вĕçеççĕ,
Çил юрлать «юрататăп» тесе,
Ман хĕре хăваласа çитесчĕ,
Каламашкăн «савниçĕм» тесе.

* * *

*Петр Тихонович Тихонов*
*вăрманçа*

«Чăваш вăрманĕ»—эс чăваш илемĕ!
Черченлĕхӳ илет-çке тыткăна.
Шап-шурă хурăнпа кам-ши киленмĕ?
Мĕнле чăваш юратмĕ юмана?

«Чăваш вăрманĕ»— эс чăн-чăн пуянлăх!
Сана пулах пурнать чăваш тату.
Симпыл, çырла, кăмпа — эсир асамлăх!
Чăваш! Ăш кăмакушăн вăрмана тав ту!

Хăнусене эс тараватах сăйлатăн.
Хапăлласа лартан кĕрекӳне.
Кăкăр тулли уç сывлăшпа сывлатăн,
Итленĕçемĕн шăпчăк юррине!

Çулла эс утă шăршипе тулатăн,
Эс хӳтĕлен тискер кайăксене.
Сарă тĕсе эс кĕркунне саватăн,
Шурă тĕсе — хĕлле те çуркунне.

Эс пурнăç тыткăчи — «Чăваш вăрманĕ»!
Эс кăмăл-туйăма çĕклентерен!

Апат паран, тумлантаран, эс эмеллен.
«Чăваш вăрманĕ»! Ĕмĕр пурăн! Çеçкелен!

Чăваш! Ӳпра та хӳтĕле эс вăрмана.
Куç шăрçине сыхланăн эс сыхла ăна.
Сăвапла тивĕçе чунтан эс пурнăçла!
Тусу пулса вăрман тав тăвĕ кашласа!

* * *

Çĕнĕ çул вăл — çĕнĕ шухăш.
Çĕнĕ çул вăл — çĕн телей.
Çĕнĕ çул вăл — çĕнĕ тупăш.
Çĕнĕ çул вăл — çĕн хĕвел.

Çĕнĕ çул вăл — çĕнĕ тăнăç,
Çĕнĕ мăшăр, çĕнĕ пурнăç.
Çĕн илемлĕ юрату,
Çĕнĕ пысăк çухату.
Çĕн таврăнми ырату.
Çĕнĕ çул вăл — çĕнĕ ăнкару.
— çĕнĕ ăнтăлу.
Çĕнĕ çул вăл — çĕнĕ ĕмĕт.
— çĕнĕ ĕнчĕ.
— çĕнĕ тулă.
— çĕнĕ кулă.
Çĕнĕ çул, сана кĕтетпĕр.
Çĕнĕ çул, сана чĕнетпĕр.
Хăвăртрах эсĕ килсемччĕ,
Васкаса эсĕ çитсемччĕ.

Илсе кил пĕрле эс савăнăç.
Юрату, телей, тулли пурăнăç.
Чунăмра хĕлхем хĕмлентĕр!
Çутă юрă кĕвĕлентĕр!

* * *

Утатпăр иккĕн улăхпа
Утмăл турат çеçки пухса.
Кусусенче — телей сути!
Çӳл тӳпере — кăвак хуппи!
Ăшшăн шухă çил вĕрет.
Шур пĕлĕте вăййа чĕнет.
Шур пĕлĕт хĕвеле хуплать.
Шур пĕлĕт çумăр сутарать.

Çумăр çăвать сан çине!
Çумăр çăвать ман çине!
Иксĕмĕр ташлатпăр çумăр айĕнче!
Çумăр çăвать сан çине!
Çумăр çăвать ман çине!
Пирĕнпе ташлать паян мĕнпур
тĕнче!

Хĕвел çиçет — çумăр çăвать.
Хĕрлĕ-кăвак кĕпер карать.
Кашни тумла — пĕчĕк хĕвел.
Пирĕн çинче — пин сар хĕвел!
Пин çут тумла питӳ çинче!
Пин çут тумла туту çинче!
Ман аллăм сан аллусенче,
Ташлатпăр çумăр айĕнче!

Хĕвеллĕ çумăр айĕнче,
Чечеклĕ улăх варринче
Ташлатпăр иккĕн йăл кулса,
Тумласене ывăçласа!
Ташлаççĕ шурă пĕлĕтсем,
Ташлаççĕ сутă тумласем.
Хĕвеллĕ çумăр айĕнче
Эпĕ телейлĕ савнипе!

## ТУПМАЛЛИ


Сан уру йĕррисене шыраръм инçет çăлтăрсем çинче . . . . . . . . . . 3
Мĕншĕн пурнăç шурă-шурă хут мар-ши? . 14
Телей саманчĕсем, мĕншĕн ытла та кĕске-ши эсир? . . . . . . . . . . 31
Сан ултаву сивĕ хĕлĕн шăнтса лартрĕ ман чĕрене . . . . . . . . . . 47
Ирĕклĕ, ирĕклĕ çил пулассăм килет . . . 66
Куллу, сан куллу, манас çук ăна... (юрă сăмахĕсем) . . . . . . . . . 85



**Альбина Васильевна ЛЮБИМОВА**

**ЧЕРЕЗ СЕРДЦЕ МОЕ МЫ ПРОЙДЕМ ВДВОЕМ**
**ЧĔРЕМ ВИТĔР ИККĔН УТАС ÇУЛ ВЫРТАТЬ**

Стихи в прозе

На чувашском языке

Редактор **А. В. Яковлева**
Художник **Д. Ф. Мадуров**
Тех. редактор **Г. Р. Евлампьева**
Компьютерная графика **А. Г. Михайлова**

Подписано в печать 17.05.96 г. Формат 70×90/32. Бумага газетная. Гарнитура об. нов. Печать высокая. Усл. печ. л. 3,51. Уч. изд. л. 3,71. Тираж 3000 экз. Заказ 767.
Типография № 1 Министерства информации и печати Чувашской Республики.
428019, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 15.